Ц. Б. им. Горького
С

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУНЬ 4 ШАМАТКУН
126 (4939) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать | ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ | Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Партин районсенчи отчотпа суйлав пухăвĕсен итогĕ

Пур районсенчи парторганизацисенче те отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Тăваттăмĕш кун ĕнтĕ Шупашкар хулинчи парторганизацин конференцийĕ пырать.

Районсенчи пухусенче Парти Обкомĕн ĕçĕсене те, райкомсен ĕçĕсене те тивĕçлипе хак панă: парти комитечĕсен политикăлла çулйĕрне тĕрĕс, практикăлла ĕçĕсене çителĕклĕ, тесе йышăннă.

Парти комитечĕсен ĕçне çакăн пек пысăк хак пани вăл — Чăваш парторганизаци, Парти Тĕпкомĕн 1937 çулти февраљ-мартри пленумĕн решенисене тата çав пленумра Сталин йулташ кăтартса панисене пурнăçласа, троцкиссемпе бухаринцăсене, буржуала националиссене т. ыт. йышши тăшмансене çĕмĕрсе такас йĕнĕпе питех те пысăк ĕçсем туса иртерни çинчен калать. Партипе совет руководствине çĕнĕ çынсем, ĕçре тĕрĕсленнĕ, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартнă çынсем—партире тăракан бољшевиксемпе партире тăман бољшевиксем пычĕç. Çакă пĕтĕм партипе пĕрле туса иртернĕ ĕçсем, социалисăм строителствинче сахал мар çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тума май пачĕç.

Районсенчи пухусем, çавăн пекех пуçламăш парторганизацисенчи пухусем, парти организацисен пĕрлĕхĕ нихăçанхинчен ытла тĕрекленнине, парти масси Сталинла Тĕпкомпа Сталин йулташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине, коммуниссен политикăлла сыхăлăхĕ ӳснине кăтартрĕç. Парти организацисем тăшмансене хирĕç хаяар кĕрешӳре ӳссе тĕрекленчĕç. Коммуниссен политикăлла идейалăхĕ, активлăхĕ хăпарчĕ. Партипе масса хушшинчи çыхăну вăйланчĕ.

Районсенчи пухусенче Обкомпа райкомсен отчочĕсем тăрăх (23 районран илнĕ сведенисем тăрăх) пĕтĕмпе 1232 çын, йе пухусенче пулнисен хисепĕнчен 47 процент тухса каланă. Пуçламăш парторганизацисенчи пухусенче тухса каланисен хисепĕ тата та пысăкрах. Пухусенче пулнă 3661 коммунисран 2700 коммунис тухса каланă, урăхла каласан, 70 процент патне пырать. Çакă вăл чăннипех те партин йĕртсе пыракан органĕсен ĕçне пĕтĕм парти масси тĕрĕслесе тухнине, партири демократи нихăçанхинчен те ытла вăйланнине кăтартать.

Çакăнтанах тата тепĕр вывăд тумала: парти организацисенче критикăпа самокритикă чылай хăпарчĕ. Кăçалхи отчотпа суйлав пухăвĕсенче пур пуçламăш парторганизацисенче те тенĕ пекех парти райкомĕсем отчот турĕç. Çавăн пекех районсенчи пухусенче парти Обкомĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчот туса пачĕ. Коммуниссем райком отчочĕ тăрăх каланă чухне те, Обком отчочĕ тăрăх каланă чухне те—пурте пĕр шухăшлă пулса парти организаци тăшманĕсене çĕмĕрсе такас кĕрешӳре пысăк çĕнтерӳсем тунине, вырăнти парторганизацисене йĕртсе пырасси вăйланнине палăртнипе пĕрлех, парти комитечĕсен ĕçĕсенче палăракан пысăк çитменлĕхсене хăйулăн критиклеççĕ. Вăл çитменлĕхсем, пуринчен ытла, партин политикăлла-массăлла ĕçĕсене кирлĕ пек сарса йарайманнинчен, партилĕ ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыма пĕлменнинчен тухса тăраççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтермели пĕртен-пĕр тĕрĕс çул вăл—хамăрăн пĕтĕм ĕçсене Сталинла Тĕпком, Сталин йулташ кăтартса панисем тăрăх туса пырасси пулать.

Парти организацисем çаплах тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкийĕсене тăтăклан пĕтерес йĕнĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Промышленноçри, строителствăри, йалхуçалăхĕнчи, суту-илӳ ĕçĕнчи куљтура фронтĕнчи прорыв ем çакăн çинчен калаççĕ те ĕнтĕ. Тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкисене социалисăм строителствин пур участкисенче те кĕске вăхăтра пĕтересси парти организацисен ĕ енчи тĕп задачă.

Парти организацисен районсенчи пухăвĕсем, пур çĕрте те тенĕ пекех, хуçалăх ĕçĕсене пĕчĕк ĕç вырăнне хурса политикăлла ĕçсенчен уйăрса йани пулнине палăртаççĕ. Вăл çитменлĕхе çине тăрса пĕтерсе пыни кирлĕ. Хуçалăх ĕçĕсене хăшпĕр райкомсем мĕн пек „пĕчĕк" ĕç вырăнне хунине çакăнтан та аван курма пулать. Патăрйел районĕнче парти районри пухăвĕ уçăлнă тĕле 11 колхозра („Хĕрлĕ йалав", „Бољшевик" т. ыт.) 1937 çулта пуçтарса илнĕ авăна та çапса пĕтермен пулнă. Парти пухăвĕн çак ыйту тăрăх йатарласа решени йышанмала пулнă. Анчах кунта ыйту хуçалăх ĕçĕсене партилĕ ĕçсенчен уйăрса йани çинчен çеç тăмасть, ыйту—партилĕ ĕçсене те кирлĕ пек йĕркелесе йаманни çинчен тăрать. Паллах, партилĕ ĕçе тивĕçлипе йĕркелесе йарсан, партилĕ ĕçĕн резуљтачĕсем хуçалăх ĕçĕнче курăнмала. Анчах ĕçре çакă курăнсах каймасть-ха. Партилĕ ĕç те чылай çĕрте хытах уксахлать. Шăмăршă районĕнчи парти пухăвĕ райком отчочĕ тăрăх йышăннă резољуцире çакна палăртать: вăрманпромхозпа вăрман хуçалăх çуменчи пуçламăш организацисенчи чылай коммунис ем хĕл каç та пĕр кружокра та вĕренмен. Йе тата Шупашкар райкомĕ çулталăк хушшинче те сочувствуйушчисен ретне пĕр çын анчах илнĕ. Парти кандидачĕсемпе пĕччен коммуниссем хушшинче ĕçлени çук. Организацире кандидатра нумай вăхăт хушши çӳрекен кандидатсем йышлă. Вĕсене парти членне куçма пулăшас йĕнĕпе райком çине тăрса ĕçлемен. Паллах, çакăн пек ĕç вăл парти райкомĕ партилĕ ĕçсене кирлĕ пек туса пыни çинчен каламасть. Çавăнпа та парти райкомĕсен хуçалăх ĕçĕсене йĕртсе пырассине тăтăклăн вăйлатмала

Анчах ку пĕре те партилĕ ĕçсене вăйсăрлатас тенине пĕлтермест, ку вăл, чăн малтан, партилĕ ĕçсене вăйлатас тенине, партилĕ ĕçсене вăйлатни тăрăх хуçалăх ĕçĕсенче пĕтĕмешле çĕнтерӳсем тумала тăвас тенине пĕлтерет.

Парти райкомĕсен çĕнĕ составне кивĕ составра пулманнисенчен 130 çын, урăхла каласан—çурри таран çĕнĕрен суйланнисем. Вĕсем хушшинче пуçласа парти руководствине хутшăннисем 94 çын. Пуçламăш парторганизацисенче руководствăна çĕнĕрен 149 çын кĕнĕ, вĕсенчен пуçласа парти ĕçне хутшăннисем 68 çын. Парти руководителĕсен задачĕ—çак çĕнĕ работниксене бољшевисăмпа хĕспăшалланма пулăшасси пулать.

Парти ĕçне пур йĕнчен те вăйлатса йамала. Суйлавсем иртнĕ хыççăн парти ĕçĕ вăйланасси куç умĕнчех. Кун çинчен пире коммуниссем парти пухăвĕсенче активлăн тухса калани ĕнентерет.

Партин шалти демократине вăйлатса йанă условисенче парти работникĕсене коллективлă руководствă, коллективлă ĕç меслечĕсене хăнахтарса пыни питĕ кирлĕ. Партком членĕсене пурне те активлă ĕçе хутшăнтармала.

Уйрăмах—тума хушнă ĕçсене тунине, йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе пымала, тăвасси парти ĕçĕнче пысăк вырăн йышанса тăрать. Çак йĕнчен пăхса райкомсен халех пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсенче йышăннă решенисене тĕрĕслеме тытăнмала. Вăл решенисене пурнăçа кĕртмеле тăвас йĕнĕпе пуçламăш организацисене кирлĕ пек пулăшу памала.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче, пуринче те тенĕ пекех, коммуниссем парти ӳсĕмĕ вăйсăр пыни çине, партире таман актив хушшинче начар ĕçлени çине, комсомола çителĕксĕр йĕртсе пыни çине кăтартрĕç. Парти комитечĕсен вăл кăлтăксене хисепе илсе пĕтĕм парти ĕçне вăйлатса йамала.

Отчотпа суйлав пухăвĕсен решенисенчен тухса тăракан пайанхи тĕп задачă вăл—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтермеле тăвасси пулать.

„Мурманец" арктикăна тухса кайнă

ЛЕНИНГРАД, ийунĕн 2-мĕш (ТАСС). Пайан тинĕс çинчи тискер кайăксене тытмали „Мурманец" суднă, капитан орденоносец Уљйанав йулташ йĕртсе пынипе Ленинградран Арктикăна тухса кайрĕ. Мурманска çитсен унта суднă çине Çурçĕр Тинĕс çулĕн Тĕп тытăмĕн ăслăлăх експедицинче йулакансене лартаççĕ. Унтан вара „Мурманец" пăрсене пĕлме Карски тинĕсне тухса кайать.

Тава тивĕçлĕ çĕнтерӳ

Г. Г. Нейгауз профессăрпа калаçни

Брӳсселрен Ежен Изаи йачĕпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕнче советан çамрăк музыкачĕсем тунă чаплă çĕнтерӳ çинчен пĕлтернине совет общественноçĕ тулли тата саккунлă мухтанса хавасланнипе кĕтсе илчĕ. Епĕр пурте хăйĕн условипе ытти конкурссенчен нумай йăвăртарах пулнă конкурс мĕнле пынине пысăк тимлĕхпе тата хумханулăн сăнаса пытăмăр.

Хаçатсенче пичетленнĕ сведĕнисем тăрăх совет пианисĕсен тĕрлĕ музыка шкулĕсем йанă пĕтĕм тĕнчери чи вăйлă пианиссемпе тĕл пулмала пулни чи пуçламăшĕнчех паллă пулчĕ. Конкурсра пулнисем хушшинче çав тери чаплă пианиссем Брӳшољри, Гао (Франци), До сор (Англи) тата Венгри пианиски Йамбор пулнă, вĕсене епĕ Варшавăра Шопен йачĕпе пулнă пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конкурс тăрăх пĕлетĕп, вăл конкурсра епĕ жӳри членĕ пулнăччĕ.

Епĕр, Ежен Изаи йачĕпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕн итогĕсемпе паллашса, çакна куратпăр: çав тери чаплă пианиска Йамбор та виççĕмĕш тура кĕрейменнипе приз илеймесĕр йулнă. Венăра виççĕмĕш преми тата Варшавăра Шопен йачĕпе пулса иртнĕ пианиссен виççĕмĕш конкурсĕнче çиччĕмĕш преми илнĕ Брӳшољри пианиска хăљ вуннăмĕш вырăн çеç йышăннă. Кусем пĕтĕмпех совет пианисĕсем Брӳсселре тунă çĕнтерӳ пысăк пулнине кăтартса параççĕ.

Совет пианисĕсем конкурса хатĕрленсе, çăмăлрах çулпа кайма рĕç. Вĕсем хăйсене валљи пĕтĕм тĕнчери музыка литературинче пур чи йăвăр произведенисене суйласа илчĕç. Калăмăла, Емиљ Гилељс программинче выљама питĕ йăвăр йапаласем пулнă. Кун çумне Бељгири Абсил композитăрăн концертне хушас пулсан, ăна вĕсен çиче кун хушшинче вĕренмеле пулнă, совет пианисĕсен çĕнтерĕвĕн тава тивĕçлĕхĕ питĕ куçа курăнмала пулса тăрать. Çирĕп танă маçтăрсем, вĕсем çĕнтерессе шанса выљана, вĕсем тунă çĕнтерӳ совет пианисĕсен шкулĕшĕн ансăртран пулнă çĕнтерӳ мар. Емиљ Гилељспа Йакав Флийер—совет пианисăмĕн мухтавлă талантчĕсем,—вĕсем хăйсен социалисăмла аслă тăван çĕршывĕ шаннине ĕçпе питĕ лайăх кăтартса пачĕç.

(ТАСС).

Бељги пичечĕ совет пианисĕсен çĕнтерĕвĕ çинчен

Бељги пичечĕ Изаи йачĕпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕнче совет пианисĕсем: Емиљ Гилељспа Йакав Флиер пĕрремĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăнса пысăк çĕнтерӳ тунине хакласа çырать. „Вуа дю пепљ" хаçат çапла çырать:

„Совет пианисĕсем тĕнчен пур кĕтесĕсенчен те пухăннă калама çук чаплă 85 пианис хушшинче çĕнтерӳ туни вăл—социалисăм çĕршывĕ искусствăпа аслăлăх йĕнĕпе тунă çав тери чаплă çитĕнӳсене татах тепĕр хут çирĕплетсе парать. Совет скрипачĕсен çитĕнĕвĕ, полљарти љотчиксен калама çук чаплă вĕçевĕ, Папанинпа унăн йулташĕсем тĕпчесе вĕреннисем пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса параççĕ—социалисăм çĕршывĕ ăстăнпа тăвакан ĕçсем йĕнĕпе те тата материаллă ĕçсем йĕнĕпе те капиталисăмлă çĕршывсене хăваласа çитсе иртсе кайма пултаракан çĕршыв пулса тăрать".

(ТАСС).

Совет Союзĕн Геройĕ И. Д. Папанин Петрозаводскра

ПЕТРОЗАВОДСК, ийунĕн 2-мĕш (ТАСС). Пайан Петрозаводска ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Совет Союзĕн Геройĕ И. Д. Папанин пынă. Хула ĕçсыннисем хăйсен депутатне савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Вокзал умĕнчи плошчĕтре нумай пинлĕ митинг пулса иртнĕ. Митингра тухса калакансем—Онежск савăтĕнчи стахановец Брызгалăв йулташ, чукунçул çинче нумай çул ем хушши ĕçлекен Йегорав йулташ тата ыт. те хăйсен сăмахĕнче геройа саламланă.

Папанин йулташ митинра кĕскен уçăмлă сăмах тухса каланă, ăна темиçе хутчен те тăвăллăн алă çупнă.

Каçпа Петрозаводскри хĕрĕх пин халăх „25 октября" плошчĕне пухăннă. В. И. Ленин памятникĕ патĕнче калама çук пысăк митинг пулса иртнĕ. Папанин йулташ митинга пухăннисене „Çурçĕр полљусĕ" станцинчи хăйĕн ĕçĕсем çинчен каласа панă.

И. Д. Папанин хăйĕн суйлавçисем патĕнче темиçе кун хушши пулнă хыççăн, Мурманска тухса кайать.

Брӳсселри йышăнура

БРӲССЕЉ, ийунĕн 1-мĕш (ТАСС). Пайан королĕн çулахи резиденцинчи дворецра, — кунта Ежен Изаи йачĕпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕн виççĕмĕш турĕнче пулнисем финалла выљама хатĕрленнĕ,— конкурс лауреачĕсен йачĕпе йышăну пулса иртнĕ.

Бељги королĕпе королеви йышăну вăхăтĕнче совет делегачĕсемпе калаçнă тата совет пианисĕсене пысăкран та пысăк çитĕнӳ тунипе сывлăх суннă.

Йышăнура пулнă жӳри членĕсем,—вĕсене конкурсра пулнисем çинчен хăйсен сăмахне калама чарнă пулнă, хăљ вĕсене калаçма ирĕк панă,—лауреатсем çинчен нумай каланă. Уйрăмăн илсен совет пианисĕсене Емиљ Гилељспа Йакав Флийер, Емил Зауерпа, Артур Рубинштейнпа, Роберт Казадезуспа тата пĕтĕм тĕнчери ытти чи паллă музыкантсемпе калаçнă чухне, хăйсем выљани çинчен чĕререн хавхаланса ырланине итлене, Артур Рубинштейнпа Роберт Казадезус конкурс питĕ çӳлĕ вырăнти не пахмасăрах, советăн ике пианисĕ нийеппе те танлашма май çук çӳлĕ вырăнта тăнине палăртнă.

* * *

Ийунĕн 2-мĕшĕнче каçхине ССР Союзĕн Брӳсселĕри полпредствинче йышăну туса ирттерет. Унта Емиљ Гилељс, Йакав Флийер, Исаак Михновский тата Павел Серебрйаков тухса выљаççĕ.

Ийунĕн 8-мĕшĕнче „Пале де базар" залĕнче конкурс лауреачĕсен, виççĕ пĕрремĕш вырăн йышăннăскерсен,—Емиљ Гилељсăн, Мери Джойстонăн тата Йакав Флийерăн пысăк концерчĕ пулать. Пурте вĕсем симфони оркестрĕпе пĕрле паллă дирижор Дезире Дефо йĕртсе пынипе конкурсăн виççĕмĕш турĕнче выљаса панă концертсене выљаççĕ.

Мускав хулинчи парторганизацин конференцинче

Мускав хулинчи партконференцийĕн ийунĕн 1-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче делегатсем мандат комисçин докладне пысăк интерреспа итленĕ.

Конференци ĕçĕсенче 763 делегат хутшăнса ĕçлет (вĕсенчен: ĕç тăвакан сасăпа 641 делегат, 122 делегат—канашлакан сасăпа). Ĕç тăвакан сасăпа пынă делегатсенчен 63,4 процентĕ тата канашлакан сасăпа пынисенчен 87,2 процентĕ—конференцийе пирвайхи хут суйласа йанăскерсем.

Конференци делегачĕсенчен 517-шĕ (68 процент)—рабочисем. Делегатсем хушшинче—ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕсем 53 çын, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем—27 çын, Совет Союзĕн Геройĕсем—6, орденоносецсем—92, стахановецсем—67.

Конференцин 371 делегачĕ партин йĕртсе пырас ĕçĕнче ĕçлеççĕ. Мандат комисçи докладне çирĕплетнĕ хыççăн, конференци парторгансене суйлама тытăннă.

Каçхи лару вĕçĕнче конференци вăрттăн сасăлама кандидатурăсем палăртассипе вĕсем çинчен сӳтсе йавассине пĕтерне.

(ТАСС).

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Уйрăм çар бойецĕсене 516 спектакљ лартса кăтартнă

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп театр коллективĕ Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Ворошилăв йулташ панă задание ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Театр, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче çичĕ уйăх çурă хушши пулса, пурĕ 516 спектакљ, 536 концерт лартса кăтартнă.

Кунсăр пуçне, театр куљтурăлла массăлла ĕçе те пысăккăн туса пынă.

(ТАСС).

Шкулсене виçĕ мильйун çурă ача вĕренме илмеле

Ийунĕн 1-мĕшĕнче РСФСР-ăнчи пуçламăш, тулли мар вăтам тата вăтам шкулсен пĕрремĕш класĕсене вĕренме кĕме зайавленисем илме пуçланă. Пĕтĕмпе 3.568.4[illegible]0 ача вĕренме илмеле, вĕсенчен 2.8[illegible]7900-шне—йалти шкулсене илмеле.

Ачасен ашшĕ-амăшĕсен, вĕсен ачисем 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнче 8 çул тултараççĕ пулсан, вĕсене августăн 25-мĕшĕнчен шкулсене вырнаçтарма тăрăшмала.

(ТАСС).

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцийĕ

Ийунĕн 2-мĕшĕнчи каçхи ларура ПСК(б)П хула комитечĕн отчочĕ тăрăх, пренире 10 делегат тухса каланă. Делегатсем парти Шупашкар хула комитечĕн ĕçне хытă критиклеççĕ—уйрăмăнах промышленноç тата агитацие пропагандă ĕçĕсене начар йĕртсе пынăшăн. Тухса калаçакан йулташсем парти хула комитетĕнчен парти пуçламăш организацийĕсемпе çирĕпрех çыхăнса ĕçлеме, вĕсемпе оперативлăрах йĕртсе пыма тата çĕнĕ кадрсене ĕçре конкретлă пулăшу парса пыма ыйтаççĕ.

— Парти хула комитечĕн инструкторĕсен ролĕ пысăк. Анчах халĕ вĕсем хăйсен ĕçĕсене çителĕклĕ туса пыраймаççĕ-ха. Партин пуçламăш организацисене пулăшу питĕ сахал параççĕ. Чукунçул строителствин управленийĕ çумĕнчи партин пуçламăш организацине туни çулталăк иртрĕ. Çав хушăра парти хула комитетĕнчен пĕр инструктăр та пырса курăнман. Мĕнле епĕр пурăнатпăр, пухусенче мĕнле ыйтусем лартса сӳтсе-йавнă, вĕсем çинчен инструктăрсем пĕлмесĕрех йулаççĕ. Кунта Парти Обкомĕн инструктăрĕсем пирки те калас пулать, вĕсен райкомсемпе хула комитетĕнче пулнипех çитмест, ытларах пуçламăш организацисенче пулмала,—тет Никитин йулташ.

Романăвă (Хула совечĕн çутĕç пайĕ) йулташ парти кандидачĕсемпе ĕçлесси çинчен калать.—Парти кандидачĕсене членă куçарма хатĕрлес тĕлĕшпе хула комитетĕнчен пуçласа пуçламăш парторганизацисене çитиччĕнех ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Хулари парторганизацинче 1928—1930 тата 1932 çултанпа кандидатра тăракан йулташсем сахал мар. Вĕсем парти членне куçас ĕçре пысăк чăрмавсене тĕл пулаççĕ. Чи пирвайхи чăрмав—вăл члена куçма рекомендацисем тупасси пулать. Кунтан та ытларах, парти кандидачĕсенчен пĕр пайне пайанччченех парти членне куçарма политикă йĕнчен хатĕрлесе çитерменни пулать. Акă, пирĕн хула çутĕç пайĕнчи пуçламăш парторганизацинех илер. Пирĕн организацинче виçĕ кандидат, вĕсенчен перне халĕ члена куçарма пулать. Тата иккĕшне (1932 çултанпа) члена куçарма хатĕрлесе çитермен епĕр.

Малала Романăвă йулташ хула ĕçсыннисене вĕрентес пирки чарăнса тăрать. Тӳрех калас пулать,—тет Романăвă йулташ,—халăха çутта кăларас ĕçе малти рете кăларас пирки хула комитечĕ те сахал пулăшнă. Епĕ хула çутĕç пайне ĕçлеме кĕнĕренпе 5 уйăх иртрĕ. Мĕншĕн хула комитечĕ хулара хутла сахал пĕлекенсене вĕрентессипе, ача сачĕсем, шкулсем мĕнле ĕçлени çинчен манăн доклада итлес мар. Итлемеле пулнă. Ку тĕлĕшпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те питĕ сахал ĕçленĕ. Йулашки кунсенче епĕ Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчен вĕçе-хĕррисĕр отношенисем илсе тăратăп. Çав хутсене ăçта хурасси çинчен епĕ пĕлместĕп. Ĕçре мана пулăшакан çук. Хулара çултан çул çĕнĕ шкулсем лартатпăр. Ку питĕ аван. 1937 çул 400 ача валљи çĕнĕ шкул ĕçе кĕртрĕмĕр. Кăçал 880 ача валљи тепĕр çĕнĕ шкул лартатпăр. Епĕр çулленех çĕнĕрен те çĕнĕ шкул çурчĕсем лартатпăр пулсан та, пайана икĕ сменăпа вĕрентес инчен хăтăлса çитеймен-ха. Çавăнпа та çитес çулсенче те çĕнĕ шкулсем лартас пирки халех хатĕрленсе пыма тытăнмала.

Хамăр çине хунă заданисене епĕр мĕнле пурнăçласа пыратпăр? Тӳрех калас пулать, питĕ çителĕксĕр. Пирĕн ĕçре питĕ нумай çитменлĕхсем. Çав çитменлĕхсенчен пĕри—вăл шкулсенче вĕренекен ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси йулса пыни пулать, 3520 ачаран 400 ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Çакна епĕр пысăк çитменлĕх тесе шутлатпăр.

Халĕ пирĕн шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕ пырать. Çав тĕрĕслӳн малтанхи резуљтачĕ мĕнле-ха? Литературăпа, нимĕç чĕлхипе ачасем пурте вĕренӳре ĕлкĕрсе пыни паларĕ. Сталинла Конституципе 6-мĕш номĕрлĕ шкулри 7-мĕш класра вĕренекен ачасем пурте отлично тата хорошо паллăсемпе вĕренӳ çулне пĕтерчĕç.

Пренире Каплин (Коммуналлă хуçалăх халăх комиссарĕ пулнă) йулташ темиçе минут хушши каларĕ пулин те, хулари коммуналлă хуçалăхра пулнă сăтарла ĕçсем камран килни тата ку тăшмансен сăтарла ĕçсен йулашкисене пĕтерес пирки Каплин йулташ хăй мĕнле кĕрешни çинчен тӳррĕн те уççăн каласа памарĕ. Сăтăрçăсем, Каплин сăмахĕ тăрăх, кунта мар, Мускавра ларнă пек туйăнаççĕ. Çавăнпа та халиччен Водосветра пулнă сăтарла ĕçсем вĕсем сăтарçăсенчен мар, ĕçе пĕлменнинчен килнĕ пулать Каплин каланипе.

Осипав йулташ та конференцинче хăйне парти Обкомĕн кивĕ буровĕнче ларнă буржуалă националиссемпе хытă кĕрешнĕ пек, вĕсем ăна хĕснĕ пек туса тухса каларĕ. Епĕр Петров чухнехи руководствăпа килĕшме пултарайман, тет вăл. Çав вăхăтрах вăл çав кивĕ тăшманла руководствăна мухтаса саламласа сахал мар кăшкăрнă. Ку руководствăна пур майсемпе те йурама тăрăшнă.

Каçхи ларăва хупăнас умĕн пренире хула совет председателĕ Калинкинă йулташ тухса каларĕ Калинкинă йулташ халăх тăшманĕсем, уйрăмăнах хулари коммуналлă хуçалăхра сăтăр туни çинчен каласа пачĕ.—Тăшмансем хăйсен сăтарла ĕçне хулан черинчен—Водосветран тытăннă, тет Калинкинă йулташ. Пайанхи куна епĕр мĕн куратпăр? Електроенерги тата шыв хула ĕçсыннисем вăљљи çитмест. Канализацине те сăтарла тунă. Канаш урамĕнчи çурт енчен тухакан пĕтĕм тасамарлăх çак канализаци тăрăх Чебоксаркă шывĕ çинĕ йухса тухать. Хула çыннисем ăна пĕлмеççĕ, çырма шывĕнче мĕн пур тесе хула çыннисем çав шывпа пит-куç çăваççĕ, ĕçеççĕ те. Акă ăçта чирчĕр сармали вырăн,—тет Калинкинă йулташ.

Халăх тăшманĕсем хула совечĕн авторитетне путарса пыма тăрăшнă. Йулашкинчен вĕсем хватер ыйтăвĕсене те Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Советĕнче пăхма тытăннă, ку ĕçрен те хула совечĕ айакка тăратса хăварнă.

Каплин йулташ,—тет Калинкинă йулташ,—хула совет председателĕ пулса, унтан Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулса чылай вăхăт ĕçленĕ. Хулара електростанци лартасси, шыв пăрки хурасси тата ытти ĕçсем те—пурте вăл йĕртсе пынипе пулса пынă вĕт-ха? Апла пулсан, çав ĕçри сăтарла ĕçсене Каплин йулташ курма пултарнă.

Калинкинă йулташ хула парторганизацине, çавăн пекех республикăри пур наркоматсене те хулари коммуналлă хуçалăх строителствинчи сăтарла ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерме, чăваш халăхĕн тĕп хулине—Шупашкара илемлĕх йĕнĕпе те, куљтура йĕнĕпе те кăтартуллă хула тăвас çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлеме чĕнет.

Орденлă Чăваш республикĕ хăйĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат В. Т. Харитонăв хăйĕн суйлавçисем патĕнче

Майăн 31-мĕшĕнче пионерсен çуртĕнче Шупашкарти 10-мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Шупашкар хулинчи 3-мĕш номерлĕ суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма регистрациленĕ кандидатпа — чăвашсен педагогика институчĕн директăрĕпе Варфоломей Тихăнăвич Харитонăв йулташпа тĕл пулчĕç. Пуху пысăк хавасланăхпа иртрĕ. Пухура доверенăйсемпе суйлавçăсем: Улитина, Миронăв, Сымокин, Григорйĕва йулташсем т. ыт. те тухса каларĕç.

Унтан ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат В. Т. Харитонăв йулташ тухса каларĕ:

— Епĕ рабочисене инженерсене, техниксене служăщисене тата пур ĕççынисене те манăн кандидатурăна палăртнăшăн, ман çине пысăк шанăç хунăшăн тав тăватăп. Пĕтĕм хамăн вăйа, хастарлăха чăваш халăхĕ тата болђшевиксен партийĕ шанса панă ĕçе чăн та болђшевикла, йăратнă аслă Сталин йулташ хушнă пек туса пыма сăмах паратăп. Пĕтĕм чунран, пĕтĕм вăйпа совет халăхĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн паттăрла кĕрешме пулатăп,—терĕ Харитонăв йулташ.

Улитина йулташ Чăваш халăхĕ Верховнăй Совета депутата суйлама тăратнă пĕрремĕш кандидат Иосиф Виссарионович Сталин йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшнĕ пани çинчен тата Сталинăн çывăх соратникĕсем, партипе правительствăн йуратнă руководителĕсем: В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, А. А. Андрейĕв, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йултăшсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшнĕ пани çинчен пĕлтерни чăваш халăхне савăнтарса çĕклентерни çинчен, чăваш халăхĕн калама çук пысăк телейĕ пулса тăни çинчен калат.

— Епĕр 3-мĕш номерлĕ округри суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар хула совечĕн председателĕшĕн П. И. Калинкинăшăн, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама В. Т. Харитонăвшăн пурте пĕр çын пек пулса хамăрăн сасăсене паратпăр, —тет Улитина йулташ.

Шупашкарти „Авторемонт" савăтĕнчи тата Полиграфтрестăн 1-мĕш номерлĕ типографинчи рабочисем, техниксем, инженерсем, служăщисем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата В. Т. Харитонăв йулташа тĕрĕс палăртрĕç. Харитонăв йулташ Чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ, коммунисен парти йĕ вĕрентнĕ, халăх тăшманĕсемпе болђшевикла кĕрешсе ӳснĕ çирĕп коммунис. Харитонăв йулташ 1905 çулта Патăрйел районĕнчи Исампайаљ йалĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1922 çулта комсомол ĕретне кĕрет. 1923 çултан пуçласа 1933 çула çитиччен Харитонăв йулташ пĕрмайах комсомолăн йертсе пыракан органĕсенче ответлă ĕçсенче пулат. Харитонăв йулташ пуринчен ытла пионерсемпе ĕçлет. 1926 çулта Патăрйел Укомолĕн бӳро членĕ, пионер бӳровĕн председателĕ пулса ĕçлет. 1928 çулта Чăваш Обкомолне пионерсен бӳро председателне илеççĕ, тепĕр çултан Харитонăв йулташа Горький крайĕнчи (халĕ Горький облăçĕ) комсомолăн конференцинче Крайкомол бӳро членне суйлаççĕ. 1930 çулта август уйăхĕн Харитонăв йулташ Горький Крайкомолĕ çумĕнчи пионерсен бӳровĕн председателĕ пулса ĕçлет. 1930 çулта Мускава Коммунисла воспитани академине вĕренме йараççĕ. Вĕреннĕ вăхăтрах Харитонăв йулташа комсомол Тĕпкомне Пионерсен Тĕп бӳровĕн председателĕн замеçтителĕ пулса ĕçлеме илеççĕ. 1935 çулта Харитонăв йулташ Коммунисла воспитани академине вĕренсе пĕтерет. Ун хыççăн ПСК(б)П Тĕпкомĕн шкулсен пайĕ йышăннă тăрăх, ăна коммунисла çутĕç инститӳтне вĕренме йараççĕ. Икĕ çул хушшинче вăл 3 çул вĕренмели курса вĕренсе пĕтерет. Академире тата институтра вĕреннĕ вăхăтра вăл парти организацисен ответлă ĕçĕнче ĕçлет, пысăк савăтсенче пропагандис пулса ĕçлет. Харитонăв йулташ коммунисен партине 1928 çулта кĕнĕ. Вăл парти çулйĕрĕнчен нихăçан та пăрăнман, пĕрмайах халăх тăшманĕсене хирĕç болђшевикла хăйаррăн кĕрешсе пынă. Вăл коммунисен партине, аслă Сталина чĕререн йуратса ĕçлекен коммунис, чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ. Чăвашсен педагогика интитучĕн директăрĕ пулса 1937 çултанпа ĕçлет. В. Т. Харитонăв йулташ институтра тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене тĕппех пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа институт ĕçĕ уйрăмăнах лайăхланса пырат. Харитонăв йултăшăн аслă аппăшĕ Патăрйел райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет, вăл СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Пуху хăйĕн йышăнăвĕнче пур суйлавçăсене те ийунĕн 26-мĕшĕнче чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕпе хĕрĕшĕн П. И. Калинкинăпа В. Т. Харитонăв йулташсемшĕн пĕр çын пек пулса сасăлама чĕнчĕ.

Филип Çтепанăвич Çтепанăв

Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлекен, Филип Çтепанăвич Çтепанăв йулташ 1889 çулта Вăрмар районĕнчи Çĕнĕкавал йалĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă.

1905 çулта Шенерпуçĕнчи икĕ класлă шкула вĕренсе пĕтерсен, Чĕмпĕрти (халĕ Улђйанăвск) учителе кăларакан шкула вĕренме кĕнĕ. Шкулта пурнăç условийĕ йапăх пулнипе Çтепанăв йултăшăн кунтан вĕренсе тухма май пулман. Вăл 1907 çулта вĕренĕве пăрахса, хăй тĕллĕн ĕçлесе çурăнма пуçлат. Нумай вăхăт вăл Сĕнтĕрвăрри шкулĕнче инструктăр—стољар пулса ĕçлет.

Империалисăмла вăрçă вăхăтĕнче мобилизаци йĕркипе Çтепанăв çара кайнă. Граждăн вăрçи пуçлансанах вăл Хĕрлĕ çара кайса Двинск хулинче пурăнат.

1918 çулта ПСК(б) Партине кĕрсе çак вăхăтченех вăл партипе совет организацисен ответлă ĕçĕсенче ĕçлесе пырат. 1918—1920 çулсенче Çĕрпӳ уйесĕнчи ĕçтăвакан комитет членĕ. Малтанах вăл уйесри ĕçтăвакан комитегра çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ. Унтан уйесри ĕçтăвакан комитет председателĕ пулат.

1920—1922 çулсем хушшинче вăл халăх хуçалăхне йĕркелес ответлă ĕçре ĕçлет. Партипе правительствă ăна Чăваш халăх хуçалăх совечĕн председателне лартаççĕ. Кун хыççăн нумай вăхăт хушши сутпа прокуратурă ĕçĕнче ĕçлет. Револђуцилĕ саккунлăха кирлĕ пек пурнăçласа пырса, Çтепанăв йулташ бӳрократисăма, волокитчиксене, çпекулђантсене, совет халăхĕн пур тĕрлĕ тăшманĕсене те хирĕç вирлĕн кĕрешет.

1932 çулта Çтепанăв йулташа Чăваш АССР Çăмăл промышленнăç халăх комиссарне лартаççĕ.

1933—1935 çулсенче Вăрнарти машинă-трактăр станцинчи политпай начађникĕнче ĕçлет. Çак вăхăтра вăл колхозсене болђшевикла тавăссишĕн, тăшманла çынсене колхозсенчен тасатса, колхозсене организацие хуçалăх тата политика йĕнчен çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ.

1935—1937 çулсенче Çтепанăв йулташ ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн çекретарĕнче ĕçлет.

Çтепанăв йулташ партипе правительствă хушнă пур ĕçсене те тӳррĕн, тăрăшса туса пырат.

Вăл Хĕрлĕ çарта ӳссе, тăшмансемпе çапăçса пиçнĕ, политикла пысăк шкул витĕр тухнă болђшевик, Ленин—Сталин партии тĕрĕс, шанчăклă ывăлĕ.

Улатăр районĕнчи „Правда", „Трудовик", „Майăн 1-мĕш" колхоз колхозникĕсен, 5-мĕш номерлĕ çу савăтĕнчи рабочисемпе служăщисен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çтепанăв йулташ кандидатурине тăратнă. Çтепанăв йулташ халăхшăн тăрăшакан, халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçлакан çын.

Вадим Петрович Чернов

Револђуциччен çĕр сахаллипе тата çĕрĕн тухăçĕ пĕчĕккĕ пулнипе Улатăр районĕнчи Çийавă хресченĕсен инçетри вырăнсене кайса тăранса пурăнмала пулнă. Çийавă хресченĕсем чукунçул çине тата Атăл çине тĕрлĕ ĕçсене: грузчике, кочегара, матроса т. ыт. те кайнă. Килти пĕчĕк çĕр татăкĕ çинче хĕрарăмсем ĕçленĕ.

Вадим Петрович Чернов йултăшăн ашшĕпе амăшĕн те хăйсен Çийавă йалĕнчен кайма лекнĕ. Ашшĕ 50 çул хушши 1918 çулччен Канаш районĕнчи Йанкăљ разйесĕнчи вăрмансенче хуралçăра пурăннă. Амăшĕ Çĕнĕ Мăратри Скажевски хушаматлă вăрман улпучĕ патĕнче ĕнесем суса, сыснасем пăхса, кĕпесем çуса тарçăра пурăннă.

1918 çулта Вадим Петровичсен çемйи Йĕпреç районĕнчи Çĕнĕ Мăрат йалĕнче çĕр илсе, йалхуçалăхĕпе ĕçлеме пуçлана. Анчах вĕсем хăйсен йат çĕрĕ çинче темĕн чухлĕ ĕçлесен те лайăх пурнăç тăвайман. Хăйсем вађђи пӳрт те лартайман. Ашшĕпе амăшĕ виличченех çынсем патĕнче хваттерте пурăнса иртернĕ.

Вадим Петрович 1906 çулта çуралнă. 9 çула çитсен вăл Тукайри пуçламĕш шкула вĕренме кĕнĕ. 1919 çулта пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă çĕре комсомола кĕнĕ. Вăл йертсе пынипе Çĕнĕ Мăрат йалĕнче комсомол йачейки организациленĕ.

1921 çулта выçлăх пулнипе Вадимăн урăх ĕçе кайса ĕçлемеле пулнă. Вăл Патăрйел уйесĕнчи финанс пайне хут çӳретекен тата хуралăç пулса ĕçлеме кĕнĕ. Ку ĕçре 1923 çулччĕн ĕçленĕ. 1923 çулта чăвашсен Совпартшкулне вĕренме кĕнĕ. Унтан 1927 çулта вĕренсе тухнă. 1928 çулта Йĕлчĕк районĕнчи Шăмалак йалĕнче вулав çурт пуçлăхĕ тата ПСÇЛКС Шăмалак вулăс организатăрĕ пулса ĕçленĕ. 1927—28 çулсенче ПСÇЛКС Йĕпреç райкомĕнче агитацине пропагандă пайĕн пуçлăхĕнче тата ПСÇЛКС райкомĕн ответлă çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1928—29 çулсенче Хĕрлĕ çарта пулнă. Хĕрлĕ çартан таврăнсан ПСК(б)П Йĕпреç райкомĕн агитацине пропагандă пайĕн пуçлăхĕ пулнă. 1930—32 çулсенче ПСК(б)П Йĕпреç райкомĕн çекретарĕ. 1932 çултан 1934 çулхи май уйăхĕччен ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн инструктăрĕ. 1934 ç. май уйăхĕнчен 1938 ç. апрел уйăхĕччен ПСК(б)П Патăрйел райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ. 1938 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнпе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш замеçтителĕ пулса ĕçлет.

Чернов йулташ 1927 çултанпа ПСК(б)П членĕ. 1934 çултанпа Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн членĕ, 1937 çултанпа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн членĕ.

Вадим Петрович Чернов кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Патăрйел районĕнчи „Пламя Октября", „Искра", „Правда", „Красный Октябрь" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Халĕ Чернов йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Вадим Петрович Чернов халăх шанăçне пурнăçлама пултаракан тата ăна тивĕçлĕ çын.

Халăх кандидачĕ

Александр Васийĕвич Сомăв йулташ Горьки облăçĕнчи Д. Константиновски районĕнчи Малинăвă йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче 1906 çулта çуралнă. Александр Васийĕвич çуралнă çемйе патша Российĕ вăхăтĕнчи ытти чухăн, асаплăхпа хĕн-хур курнă çемйесенчен уйăрăлса тăмаст. Унăн ашшĕпе амăшĕ совет влаçĕ пуличчен çутă кун, ырă пурнăç курман. Çемйе пысăк пулнă. Çимели çитмен, ачисем йĕркелĕ çи-пуç тăхăнса курман. Сомăвăн ашшĕ—Васийлий çак пысăк çемйене тăрантарса усрас тесе, пĕрмайах пуйансем патĕнче ĕçлесе пурăннă. Вăл кăмакасем туса çӳренĕ, чылай вăхăт камĕнщикре ĕçленĕ. Амăшĕ 1924 çулччен йалхуçалăхĕнче ĕçлесе пурăннă. Кун хыççăн, 1925 çултанпа, столовăйри работницă пулса ĕçлет.

Александр Васийĕвич ашшĕ вилнĕ чухне пĕчĕккĕ пулнă. Ача чухнехи пурăнăçне амăшĕпе пĕрле, аслăшшĕпе пиччĕшĕ патĕнче пурăнса иртернĕ. Çак çити-çитми пурнăçа пула вăл пĕчĕкренех ĕçлеме пуçланă. Хăй ытла та çамрăк пулин те, аслăшшĕ хуçалăхĕнче ытти вăй-питти çынсемпе пĕртан ĕçлесе пынă.

А. В. Сомăв револђуцилĕ çамрăксемпе çыхăнса ĕçлеме тытăнат. Вăл хăйсен йулташĕсемпе пĕрле 1922 çулта, Малинăвкă йалĕнче РКСМ йачейки организацилет. Кун хыççăн комсомол ĕçĕнче 10 çул хушши ĕçленĕ вăл. 1925 çулччен вулăсри ПСÇЛКС комитечĕн ответлă çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1925 çулхи феврађте, комсомолăн уйесри конференцийĕнче, ăна ПСÇЛКС Чулхула уйесĕнчи комитечĕн бӳро членне суйланă. 1926—1927 çулсенчи Чулхула кĕпĕрнинчи комсомол комитетĕнче ĕçленĕ.

1928—30 çулсенче Сомăв йулташ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче пулнă.

Сомăв йулташ 1917 çулта йалти пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă. 1924 çулта II класлă шкултан вĕренсе тухнă. Вăл активлине тата пултарулине курса, 1930 çулта ПСÇЛКС Тĕпкомĕн 5000-лĕ разверстки тăрăх, ăна Горькинчи механикăлă—машинострой институтне вĕренме йанă. Обшчĕствăлă тата йертсе пырас ĕçре пысăк опыт пухнă Сомăв йулташ институтра обшчĕствăлă-политикăлă ĕçре хĕрӳлĕн ĕçлет. Парти организаци ĕçне те хĕрулĕ хутшăнат. Институтра партком çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1933 çулта ăна институтран вĕренсе тухиччĕнех МТС политпайĕнче ĕçлеме йараççĕ. Кунта вăл хăйĕн болђшевикла пултарулăхне, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăнса ĕçленине уççăн кăтартса парат. Çак вăхăтранпах вăл парти ĕçĕнче ĕçлет.

1935—1937 çулсенче ПСК(б)П Пăрачкав райкомĕн иккĕмĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1937 çулхи феврађ уйăхĕнченпе ПСК(б)П Кувакинă райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕнче ĕçлет.

Сомăв йулташ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат. Вăл Ленин—Сталин парти ĕçне парăнса халăх телейĕшĕн, социалисăмшăн кĕрешет.

Улатăрти суйлавçăсен кандидачĕ

Вĕççĕр тăсăлса выртнă чукунçул. Вĕçĕмсĕр тавар, халăх çуренĕ пуйаспа. Хăрушă та тискер вăхăт. Çамрăк, тин çеç аталанакан социалисăмла çĕршыва пур йĕнчен те тăшмансем çавăрса илнĕ. Деникин, Врангел, Йуденич тата ытти генералсемпе нимĕç буржуйĕсем Украинăна çĕмĕрнĕ, Дон çине кайнă. Алла пăшал тытса çĕршыва, ирĕклĕ пурнăçа капиталиссемпе помещиксенчен сыхламала пулнă. Куна кашни рабочипе хресчен ăнланнă. Çак вăхăтра Александр Павлăвич Йерофейĕв йултăшăн ашшĕ чукунçул çинче ĕçленĕ. Вăл социалисăмла тăван çĕршывăн чукунçулне тăшманран сыхлана. Ĕçре сисĕмлĕ пулмала пулнă.

Йерофейĕв йултăшăн ашшĕ 36 çул хушши чукунçул çинче рабочи пулса ĕçленĕ. Малтан çул çинчи хуралçă пулнă. Унтан Сормăвăра тата Улатăрти пăравуссем йусакан савăтсенче фрезеровщик пулса ĕçленĕ. 1934 çултан пенçи илсе пурăннă. Амăшĕ хут пĕлмен, пуйансем патĕнче тарçăра пурăннă.

Йерофейĕв йулташ 1908 çулта Улатăрти чукунçул çинче ĕçлекен рабочи çемйинче çуралнă. Ашшĕ чукунçул çинче ĕçленине кура унăн ĕмĕчĕ те чукунçул çине кайса ĕçлесси пулнă. Аслăшшĕ ăна:

— Ӳсетĕн ак, есĕ те чукунçул çинчи рабочийех пулăн, тенĕ.

Шкула кайма çул çитсен, Александр чăн та чукунçул çинчи хапрăк-савăт шкулне кайса вĕренет. Унтан вăл пăравуссем йусакан слесăр специађнăçне илет.

Вăл Улатăрти пăравуссем йусакан савăтра слесăрта тата депори пăравус машинисĕн помошникĕнче ĕçленĕ хушăрах, чукунçул çинчи çамрăк пионерсемпе ĕçлет.

Александр 1930 çултанпа комсомол ĕçĕнче. Пăравуссем йусакан савăтра ПСÇЛКС коллективĕн çекретарĕ. Унтан Улатăрти ПСÇЛКС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕнче, йулашкинчен ПСÇЛКС Улатăр райкомĕн çекретарĕ пулса ĕçлет.

1933 çулхи март уйăхĕнчен вăл Вăрмарти машина-трактăрлă станцинчи политпай начађникĕн помошникĕнче ĕçлет. МТС-сем çумĕнчи политпайсене пĕтерсен, каллех вăл ПСÇЛКС Улатăр райкомĕн çекретарĕ пулат.

1937 çулхи август уйăхĕнчен Йерофейĕв йулташа Улатăр ПСК(б) Парти райкомĕн çекретарне суйлаççĕ. 1924 çултанпа комсомолра, 1930 çултанпа парти членĕнче.

Йерофейĕв йулташ комсомолра, партипе совет правительстви кăтартса пынипе ӳссе çитĕнсе, хăйне хушнă пур ĕçре те Ленин—Сталин партийĕшĕн чĕререн тăрса ĕçленине кăтартнă.

Халăх тăшманĕсемпе, троцкисла-бухаринла-рыкăвла тата ытти пур тĕрлĕ тăшмансемпе кĕрешес ĕçре те вăл вирлĕн ĕçленĕ, ĕçлет те.

Александр Павлăвич Йерофейĕв йулташа, партипе правительствă хушнă пур ĕçре те тӳррĕн ĕçленине кура, Улатăрти Кирăвски хула суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Çĕршывăн шанчăклă хĕрĕ

1913 çулта Улатăр районĕнчи Стемасри Грабăвсен çемйинче Йевдокийă йатлă хĕр ача çуралсан, вĕсемшĕн пĕр савăнăç та пулман. Йевдокийă амăшĕнчен кӳршĕри хĕрарăмсем: „ывăл-и, хĕри,"—тесе ыйтсан, Йевдокийă амăшĕ: „хĕр ача",—тесе йăвăррăн кулђанса ответленĕ.

Йевдокийă ашшĕнчен 6 çултах тăлăха тăрса йулнă. Пĕчĕкрен ашшĕнчен тăлăха тăрса йулнипе Йевдокийăн çамрăклăхĕ савăнăççăр, йĕрсе, кулђанса иртнĕ. Пурнăç малала шунă. 1932—1934 çулсенче вăл Улатăрти тапак совхозĕнче работницă пулнă. Пурнăç лайăхланса пынă.

Йалта „Путь Ильича" йатлă колхоз организацилесен, халиччен чухăн пулнă çынсем колхозра лайăх пурăнма пуçланине кура, 1934 çулта Йевдокийă Федăрăвнăсен çемйи те колхоза кĕнĕ.

Колхоза кĕрсен Йевдокийăсен çĕнĕ пурнăç пуçланнă. Вăл колхозри пур ĕçре те пĕтĕм хастарлăхпа ĕçленĕ. Колхоза чейелле майпа шăвăнса кĕнĕ кулаксене, сăтăрçăсене, тăшмансене тасатас тата вĕсен сийенлĕ ĕçĕсене пĕтерес ĕçре паттăррăн кĕрешнĕ.

Йевдокийă Федăрăвнă Грабăвă йулташ колхозра, пурне те пример кăтартса, ĕçсене тĕплĕн те пахалăхăн тунине кура, ăна колхоз правленийĕ темиçе хутчен те хаклă премисем панă.

Колхоз производствинче вăл чăсах палла ударницă пулса тăнă, 1937 çулта хăй пĕччен уйхир ĕçĕнче 409 ĕçкунĕ тунă.

Йевдокийă Федăрăвнă Грабăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăр районĕнчи „Путь Ильича", „Победа Октября" колхоз колхозникĕсемпе Улатăрти вырђах хатĕрлев антурĕн совхозĕнчи тата ытти предприйатисенчи рабочисемпе служăщисем суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Грабăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Стемас суйлав округĕнче регистрациленĕ.

ЙЕФРЕМĂВ йулташ

Пуху шавлăн иртнĕ. Колхозниксем 1937 çулта вăйлă тырпул туса илесси çинчен сӳтсе йавнă. Пĕрисем гектартан 15 центнĕр туса илсен, пит аван тесе калаçнă, хăшĕсем—тырра вырса иличчен миçе центнĕрне каламасан та йурат, тесе лăпланнă. Чылай калаçсан-калаççан, пĕр çамрăк качча сăмах илет.

— Болђшевиксемшĕн çĕнтерсе илмеле мар крепăç çук. Мĕнпур ĕççыннисен генилĕ çулпуçĕ, пирĕн йуратнă аттемĕр Сталин çак çывăхри 2—3 çул хушшинчех социалисăмлă уйхирсенчен çулсерен 7—8 миллиард пăт тĕштырă пуçтарса кĕртмеле тесе задач лартрĕ. Ку колхозниксемшĕн уйрăмăнах чыслă та хисеплĕ ĕç. Кăна пурнăçлама мĕнпур çĕршыв тытăнчĕ. Йулташсем, епĕр мĕнрен начар? Йе пирĕн пултарулăх çук-и? Çавăнпа та, колхозниксем, пайан епĕ сире хамăн шухăша каласа пама шутларăм. Хамăн бригадăпа епĕ 1937 çулта гектар пуçне 20 центнĕр тĕштырă туса илме сăмах паратăп. Ытти бригадăсене те вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухма чĕнетĕп...

Çак харсăр сăмахсене колхоз бригадирĕ комсомолеç Петр Йефремăвич Йефремăв хăйулăн, пĕр иккĕленмесĕр туса каланă.

Йефремăв Петр 1914 çулта Трак районне кĕрекен Йанмурзинă йалĕнче, чухăн хресчен çеймиче çуралса ӳснĕ. Çиччĕре чух унăн ашшĕ вилсе кайат. Ахађ те йăвăр пурнăç татах та йăвăрланат. Вĕренме каймали çул çитсен те вĕренме кайаймаст. Вăл вĕренесшĕн çуннă. Хăйĕнпе пĕр çулти йултăшĕсем сумккă çакса шкула утнине курсан, унăн чĕрийĕ ыратнă. Вăл шăлĕсене çыртса: „Вĕренетĕпех", тенĕ. Чăнахах та 10 çулхи Петĕр вĕренме тытăнат. Çапла вара вăл 1932 çулта çичĕ çул вĕренмели шкула пĕтерсе тухат.

...1933 çул Йефремăвшăн нихăçан манми çул. Çак çулăн пуçламĕшĕнче унăн пурнăçĕ колхозра чечеке ларат. Кунта вăл хăйĕн чи тивлетлĕ раскалне тупрĕ. Колхоза çырăнсанах çамрăк колхозник хăйулăн ĕçе кӳлĕнчĕ. Лайăх ĕçленине кура, 1934 çулта ăна колхозсен районри шкулне вĕренме йараççĕ. 1936 çултан пуçласа 1937 çулхи декабĕрчен колхозра бригадир пулса ĕçлет.

Бригадирта пĕр çул ĕçленĕ хыççăн, колхозниксемшĕн Йефремăв йулташ авторитетлă çын пулса тăрат. Мĕншĕн-ха?

...Уйран тырпулсем пуçтарса кĕрес вăхăт çывхарнă. Хăйĕн пухура туса каланă сăмахĕсене Йефремăв Петр хумхана-хумхана аса илет. Уйхирсенче шерепеллĕ тырă кашлана. Тырпул лайăх пулин те çамрăк бригадир пĕрре те лăпланма пултарайман: тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕме тимлĕн хатĕрленнĕ вăл.

Йефремăвăн тахçантанпа кĕтнĕ шухăшне тырпул тухăçне кăтартса паракан комиççи татса пачĕ. Вăл каланă тăрăх, унăн бригади вăтам шутпа кашни гектартан 22,5 центнĕр тĕштырă пуçтарса илмеле.

Чăнахах та, комиççин тырăсене вырса пуçтаричченх каланă сăмахĕ ытлашшипех тĕрĕс пулчĕ. 1937 çулта Йефремăв бригади кашни гектартан 23 центнĕр тĕштырă туса илчĕ. Ахађтен мар ĕнтĕ бригадир Йефремăв кăçал йалхуçалăх стахановцисен республикăри слђотне кайма тивĕç пулчĕ. Ахађтен мар ăна Чăваш правителствии çĕвĕ çĕлекен машинăпа премилерĕ.

Колхозниксем ăна йуратаççĕ, хисеплеççĕ. Вĕсем ăна колхоз председателне кĕртесшĕн. 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче колхозниксен пухăвĕ Йефремăв йулташа колхоз председателне суйласа лартат. Йаланхи пекех, вăл çак ĕçе те хăйулăн тытăнчĕ. Колхозниксене кашнинех хăйĕн вырăнне лартрĕ.

Йефремăв Петр умĕнче кăçал пĕлтĕрхинчен те вăйларах тырпул туса илес задачă тăрат. Ăна вăл пурнăçлатех. Ахађтен-и вăл уйа 7000 лав торф кăларчĕ, 5000 лав тислĕк, 2500 лав йушкăн пухрĕ, 96 центнĕр фосфăр çăнăхĕ, 48 центнĕр кали тăварĕ саптарчĕ. Пĕтĕм çĕре суртлă вăрлăхсемпе акса хăварнă, акасса 100 процента йахăнах машинăпа акнă.

Çамрăк председателĕн ĕçĕсене колхозниксем аван кураççĕ. Унăн хастарлăхне вĕсем ырлаççĕ, кирлĕ пек хаклама пĕлеççĕ.

Вăтă колхозник Григорий Тимофейĕвич Бардасăв Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă чухне, ун çинчен çапла каларĕ:

— Вăл Ленинăн—Сталинăн партине чĕререн парăнса, халăха йуратса ĕçлет. Хăй умне лартнă задачĕсене пĕр иккĕленмесĕр пурнăçласа пырат. Вăл ĕççыннисемшĕн пĕр ӳркенме пĕлмесĕр, вăшавăтлă ĕçлекен çамрăк болђшевик. Колхозниксемпе кăмăллăн калаçат, ăна епĕр пурте йуратапăр. Кун пек çынна Верховнăй Совета суйласан йăнăш пулас çук. Йефремăв пек çынсем, суйлавçăсен шанăçне илме пултараççĕ. Çавăнпа та епĕ Петр Йефремăва Карай суйлав округĕнчен Чăваш республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата сĕнетĕп.

Колхозниксен пухăвĕ Бардасăв йулташ сăмахĕсемпе хаваслăн килĕшрĕ.

М. Пахчаç.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн отчочĕ

ПСК(б)П хула комитечĕн тата ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ Г. И. Иванов йулташ туна доклад*)

Йулташсем! ПСК(б)П Шупашкар хула организацин III-мĕш конференцийĕ пулнăранпа пĕр çулталăк иртрĕ. Çак çулталăк хушшинче пирĕн çĕршывăн политикăлă тата хуçалăхла ÿсĕмĕнче пысăк çитĕнÿсем пулчĕç. Тĕнчери чи демократиллĕ Сталинла Конституци тăрăх ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕ пулса иртрĕ. Рабочисем, колхозниксем, ĕç интеллигенци тата пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăхĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕнче хăйĕн политикăлă активлăхне, хăйĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне, коммунисла партипе унăн çулпуçĕ Сталин йулташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине кăтартрĕç.

Малала докладчик пирĕн çĕршыври ĕçхалăхĕ коммунисла парти, унăн Тĕп Комитечĕ тата партипе халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йĕртсе пынипе социалисăм строитĕлствин пур участкисенче те пысăк çитĕнÿсем туни çинчен каласа парат. Çак çитĕнÿсене халăх тăшманĕсене хирĕç—фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсене хирĕç, буржуалă-националисла бандитсене хирĕç хайăррăн кĕрешсе пынипе тунă.

Парти Тĕпкомĕн февраль-мартри (1937 çул) пленумĕ хыççăн Шупашкарти парторганизаци пĕтĕм партипе пĕрле хăйĕн речĕсене халăх тăшманĕсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирторчĕ. Троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă-националиссем тата ытти тĕрлĕ шпионсем Шупашкарта пуринчен ытла йĕртсе пыракан вырăнсенче ларнă. Хулари парторганизаци тата пирĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен йулташсем сыхă тăни çав тăмшансен çăхан йăвисене палăртса, çапса салатма пулăшрĕ.

Республикăн тата унăн столицин хуçалăхпа культура строитĕлствинче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Пирĕн хула ÿсе пырат. Хулана економикăпа культура тĕлĕшĕнчен ÿстерес ĕç çине пирĕн парти тата Чăваш республикĕн правитĕлстви уйрăмах тимлĕн пăхаççĕ.

Хула промышлĕнноçĕ тата хула хуçалăхĕ

Пирĕн хулари промышлĕнноç пысăк мар. Пирĕн тир-сăран савачĕ, макарон хапрăкĕ, деткомиссин хапрăкĕ, çпирт-ерех савачĕ, милютинри вăрман савачĕ, кирпĕч савачĕ тата алăсталăх промышлĕнноçĕн пысăк мар предприйатийĕсем пур. Пирĕн хулари государствă промышлĕнноçĕн предприйатийĕсенче 851 çын тата алăсталăх промышлĕнноçĕн предприйатийĕсенче 628 çын ĕçлеççĕ. Хула комитечĕ ку предприйатисене йĕртсе пырас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçленĕ, уйрăмах тир-сăран савачĕпе нумай ĕçленĕ. Хула комитечĕ ку савăтра тăшманла елементсене палăртнă, вĕсем сăтăрла ĕçсем туса пынă. Сăтăрлăха пĕтернĕ хыççăн савăт 1937 çулти иккĕмĕш çурçулăн производствă планне 112,1 процент, 1938 çулхи пĕррремĕш квартал планне 103,4 процент тултарнă. Ку савăтра халĕ рабочи-стахановецсем 26 процент шутланаççĕ. Кунта социалисăмлă ăмăртăва начар мар организациленĕ. Çаксем вĕсем малашне те савăтăн производствăлă программине иртерсе тултарса пымали условисем пулса тăраççĕ.

Деткомиссин хапрăкĕ 1938 çулти пĕрремĕш квартал планне 150 процента йахăн тултарнă. Анчах вăл хăшпĕр продукцисене туса кăларас йĕнĕпе начар ĕçлет-ха.

Çпирт-ерех савачĕ хăйĕн производствăлă программине йăланах иртерсе тултарса пырат. Хула комитечĕ кунта партилĕ-массăла ĕçе начар мар йĕркеленĕ,—савăт лайăх ĕçлени çавăнтан килет. Ку савăтра социалисăмлă ăмăртупа ударничĕствăна анлăн сарса йанă. Савăтра мĕн пур рабочисенчен 54 процент стахановецсем. Анчах, кунпа пĕрлех, çав савăтăн хуçалăх руководствви большевикла ĕçлеменни çинчен те каласа хăвармала. Савăт директорĕ пулнă Пугин стахановла йухăма тата производствă программине тултарас ĕçе хăй чăрмантарса пынă. Çавăншăн ăна парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ĕçрен кăларнă. Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ савăт ĕçне лайăхлатма татăклă майсем йышăннă хыççăн, савăт малашне лайăхрах ĕçлеме пуçлĕ, тесе шутлатпăр.

Хулара алăсталăх промышлĕнноçĕн çистемипче тăракан 14 ертел хăйсен производствă планĕсене тултарса пыраççĕ. Ленин йачĕпе тăракан ертел 1937 çулти пĕрремĕш çурçуллăх производствă планне 125 процент, иккĕмĕш çурçуллăх планне 170 процент тултарнă. Анчах çав ертел пушартан сийен курнă,—промсойузăн ăна пулăшас пулат.

Епĕр пур ертелсем те лайăх ĕçлеççĕ, социалисăмлă ăмăртăва лайăх организациленĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ, тесе калама пултараймастпăр-ха. Самахран, „Кожупряжь" ертел хăйĕн производствă программине тултарса пымаст. Ертелсенче ĕçе начар органнизациленĕ, хăшпĕр маçтерскойсем хăш чух ĕççĕр те лараççĕ.

Республикăра тата хула комитетĕнче ларнă халăх тăшманĕсем Шупашкарта промышлĕнноç тăвассине хирĕç ĕçлесе пынă. Паллах, çавна пула иртнĕ вăхăтра Шупашкарта макарон хапрăкĕсĕр пуçне нимĕнле промышлĕнноç та туман пулнă. Парти Обкомĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата хула комитечĕ çавна тÿрлетсе йăлама пур майсемпе те тăрăшаççĕ. Шупашкар хулинче шултра промышлĕнноçлă предприйатисем лартса, промышлĕнноç центăрĕ туса хумала.

Малала докладчик Шупашкарти пристань ĕçĕсем çинчен каласа, кăçалхи çул хуçалăх организацисем шыв транспарчĕпе тавар турттарма договăрсем пĕчĕклетсе тунине палăртат. Çавна хирĕç пирĕн хытă кĕрешмеле.

Хулари автотранспăрт ĕçĕсем çинчен калана хыççăн, докладчик çĕнĕ строитĕлствă ĕçĕсем çинчен калама пуçлат.

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ тăрăх, Шупашкарта çĕнĕ строитĕлствă ĕçĕсене пысăккăн тумала. Парти Тĕпкомĕпе Правитĕлствă Шупашкарта пысăк предприйатисем тума йышăннă. Савăтсене тума тытăннă та ĕнтĕ. Кăçалхи çул тата резинă савăтне тумала.

Ç у р т - й ĕ р, социаллă-культура строитĕлстви, електростанци тата хулапа шыв тăратас йĕнĕпе те пысăк ĕçсем тума план йышăннă.

Пайанхи куна илсен, пирĕн хулара пурăнмали çурт-йĕр хуçалăхĕ уйрăмах кайри вырăнта тăрат. Хулара пурăнмали çурт-йĕрсене тăвас тĕлĕшпе епĕр пайанхи хăвартлăхпа çеç ĕçлесен, çурт-йĕр ыйтăвне вуншар çулсем хушшинче те татса парайас çук. Республикă центăрне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе партипе правитĕлствă укçа-тенкĕ йĕнĕпе пире пысăк пулăшу пачĕç пулсан та, хула хуçалăхĕн нушисем пысăк-ха. Мĕншĕн тесен, халăх тăшманĕсем хула хуçалăхĕн ÿсĕмне пур йĕнчен те чăрмантарса пынă. Халăх тăшманĕсем строитĕлствă ĕçне панă укçа-тенкĕпе усă курмасăр хăварни çинчен каласа парат докладчик.

Пирĕн кăçал 880 вырăнлă шкул, 24 хватерлĕ çурт тумала, електростанцине пысăклатмала, урамсемпе тротуарсене асфальт сарса 740 пин тенкĕлĕх, урамсене чул сарса 150 пин тенкĕлĕх ĕç тумала. Çапла вара, кăçал коммуналлă хуçалăха пурĕ 5 мĕлйун тенкĕ йахăн хывмала. Çавăнпа пĕрлех кăçал чукунçул станцине тата унăн сооруженисене туса пĕтермеле. Кăçал промышлĕнноçа, социаллă-культура строитĕлствине тата коммуналлă хуçалăха пурĕ 48 мĕлйун тенкĕ хывмала.

Хула комитечĕ çĕнĕ строитĕлствă ыйтăвĕсемпе тĕплĕнрех палăрна хыççăн çакăн пек вывăд турĕ. Строитĕлствă ĕçĕнчи чăрмавсем вĕсем пĕтĕмпех строитĕлствă ĕçĕнчи сăтăрçăсене ку тарăнччĕнех палăртса пĕтермĕнрен пулса пыраççĕ. Сăтăрлă ĕç коммуналлă строитĕлствăра уйрăмах хыттăн палăрат. Иртнĕ кунсенче ку ыйтăва Парти Обкомĕн бÿровĕ пăхса тухрĕ, строитĕлствă ĕçне чăрмантарса пыракансене пит çирĕппĕн айăпламала турĕ. Обком бÿровĕ Коммуналлă хуçалăхăн Халăх Комиссарне Каплин йултăша ĕçрен хăтармала турĕ. Ку решени малашне строитĕлствă ĕçне тĕпĕрелех улăштарма, лайăхлатса йама пулăшмала.

Бÿджет тата финанс планĕ

1938 çулхи бÿджет 1937 çулхипе танлаштарсан 48 процент ÿснĕ. 1932 çулхипе танлаштарсан вăл 4 хут ÿснĕ. Çава вăл Шупашкар хулине, республикăн центăрне, çĕклентерес тĕлĕшпе парти Обкомĕ тăрăшнине палăртса тăрат. 1937 çулхи бÿджета мĕнле пурнăçланă-ха? Хула бÿджетне доходсем йĕнĕпе 130 процент тултарнă, тепĕр майлă каласан, 460 пин тенкĕ ирттерсе тултарнă. Расхут йĕнĕне 104,28 процент тултарнă. Хула совечĕ 1937 çулхи бÿджета пурнăçлас ĕçре начар мар ĕçленĕ. Докладчик 1938 çулхи бюджет çинчен те чарăнса тăчĕ. 1937 çулта финанс планне кашни кварталтах тултарса пынă. Çулталăкри финанс планне 110 процент тултарса республикăра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Финанс планне тултарасси 1938 çулта та аван пулса пырат. Пирĕн задачă вăл—бÿджета пурнăçлассине финпланпа сыхăнтарса пырасси пулат, финанспа бÿджет дисциплинине пăханнине тĕрĕслесе тăмала, йĕркесĕр ытлашши расхутсемпе хыттăн кĕрешмеле.

Хулари суту-илÿ ĕçĕсем çинчен

1937 çулта Чебторг тавар çаврăнăш планне 119 процент тултарнă. Апат-çимĕç йĕнĕпе плана 124 процент тултарнă. Чебторгин хăй планне 103 процент тултарнă. Анчах 1938 çулта тавар çаврăнăш планне тултарас ĕç йапăх пырат-ха. Докладчик суту-илÿ организацисем начар ĕçлени çинчен калана хыççăн, вĕсен ĕçĕнче хуçасăрлăх пысăккине тата вĕсем суту-илÿ ĕçне организацилес ответлăха туйманнине палăртат. Парти Обкомĕ хальхи вăхăтра ку тĕлĕшпе татăклă ĕçсем турĕ. Шалти суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн, Чăвашсойузăн, Чăваштӧргăн руководствине çĕнетнĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ те суту-илÿ организацисен ĕçĕсене лайăхлатса йама татăклă ĕçсем тунă.

Суту-илÿ организацисен инкекĕ — растратăсем. Республикăра тата хулара суту-илÿ организацисенче ĕçлекен çĕнĕ работниксен суту-илÿ организацисене кĕрçе кайнă тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулăшкисене пĕтерес тĕлĕшпе вăйа хурса ĕçлемеле.

Сывлăха сыхлакан учрежденисен ĕçĕсем çинчен

Хулари сывлăха сыхлакан учрежденисен лайăх ĕçлеме пур условисем те çителĕклĕ пулсан та, вĕсем халĕ те-ха начар ĕçлеççĕ. Докладчик сывлăха сыхлакан учрежденисем мĕнле ĕçлени çинчен каласа парат. Хула комитечĕ, хула совечĕ те хулари сывлăха сыхлакан учрежденисен ыйтăвĕсемпе, сăмахран, сывлăха сыхлакан учрежденисен ĕçĕсене йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлемен. Ку йанăша тÿрлетмеле.

Халăха çутта кăларас ĕç çинчен

Докладчик халăха çутта кăларас ĕç çинчен чарăнса тăрса, хулари халăх йышĕ ÿссе пынă май шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ те ÿссе пыни çинчен калат. Çапла вара тÿрех каламала,—тет докладчик,—хальтăвакан 880 вырăнлă шкул та пире çителĕклĕ пулмаст. Докладчик малала шкулсене учебниксем тăратасси çинчен чарăнса тăрат. Ку тĕлĕшпе суту-илÿ организацисенче ĕçлекен коммуниссен хăйсен ĕçĕсене тĕпренех лайăхлатмала.

Хула совечĕн ĕçĕсем çинчен

Хула совечĕн ĕçĕсене пăхса тухса, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кивĕ руководитĕлĕсем хула советне кайри вырăна хăварса, хула хуçалăхне ÿстерсе пырассине чарса тăни çинчен калат. Калинкинă йултăша хула совет председателне лартнă хыççăн хула совечĕн ĕçĕсем тÿрленме пуçларĕç. Анчах çавах хула совечĕ предприйатисемпе учрежденисен ĕçне лайăх йĕркелене тесе калама çук-ха. Хула советĕнчи хăш-пĕр работниксем хула совечĕн ÿссе пыракан пысăк ответлăхне туймаççĕ. Маслăв йултăш—хулари коммуналлă хуçалăхăн пуçлăхĕ,—пирĕн умра тăракан пысăк задачăсене пурнăçлама пултараймаст. Хальхи вăхăтра хулара коммуналлă хуçалăх пысăк вырăн йышăнса тăрат. Çавăнпа та ку ĕçе пысăк ответлă работнике лартмала. Хулари халăх хуçалăхĕн планне пурнăçлама мĕн пур вăйа мобилизацилемелĕ.

Профсойуз организацисен ĕçĕсем çинчен

Профсойуз организацисем пирĕн хулара 50 ытла. Учитĕлсен сойузĕн çеç хула комитечĕ пур, чылай профсойузсен хăйсен облăçри комитечĕсем те çук. Пирĕн тата çакăн пек профсойуз организацисем пур: вĕсен йышĕнче пĕр коммунис та çук. Анчах, йышăнас пулат, хула комитечĕ ку профсойуз организацисемпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Ку ĕçе тĕпренех лайăхлатас пулат.

Профсойуз организацисен, ытти пур ĕçсене тунисĕр пуçне, хăйсен членĕсемшĕн культурăпа йăла тĕлĕшпе ĕçлемелĕ. Профсойуз организацисен хăйсен членĕсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне организацилеме тимлĕн тытăнмала.

Комсомол организацин ĕçĕсем çинчен

Хальхи вăхăтра хулари комсомол организацинче комсомолецсем 2637 çын тăраççĕ. Çулталăк хушшинче хулари комсомол организацине çĕнĕрен 327 çын илнĕ. Малала докладчик ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлав кампанине иртернĕ чухне хулари комсомол организаци парти организацине пысăк пулăшу пани çинчен чарăнса тăрат.

Комсомол организацийĕ те, парти организацийĕ пекех, отчотла тапхăрта халăх тăшманĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Анчах, çавăнпа пĕрлех, комсомолăн облăçри конференцийĕ хыççăн организацире хăшпĕр уйрăм комсомолецсене нимĕнле сăлтавсăрах тăшмансен шутне тата вĕсене пулăшакансен шутне кĕртме пуçланă. Çапла тунипе чылай комсомолецсене нимĕнле сăлтавсăрах комсомолтан кăларнă тата ПСÇЛКС Обкомĕпе хула комитечĕн членĕнчен кăларнă пулнă.

Комсомолăн хула комитечĕ кайрантарахпа çав йанăшсене татăклăнах тÿрлетнĕ. Анчах тасаранах елеклесе комсомолтан кăларнисем пайанхи куна та пур-ха, комсомолăн хула комитечĕ вĕсене комсомола кайала илмеле туман-ха.

Унтан докладчик ПСÇЛКС организацинче воспитани парас ĕç мĕнле тăни çинчен, комсомолта тăман çамрăксемпе тата пионерсемпе ĕçлени çинчен çутатса парат.

Уйрăмах докладчик хулара оборонă ĕçне вăйлатасси çинчен чарăнса тăрат.

Хулари парторганизаци

Пирĕн хулара пурĕ пуçламĕш парторганизацисем 63 шутланаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне çĕнĕ стройкăра тепĕр пуçламĕш организаци тăваççĕ. Пирĕн тата парти-комсомол групписем иккĕ пур.

Мĕнле ÿссе пырат-ха пирĕн парторганизаци хăйĕн ретне çĕнĕ членсем илсе? 1937 çулта партине 12 çынна илнĕ. Çапла ĕнтĕ 63 пуçламĕш парторганизаци те 12 çынна çеç илнĕ. Вăл цифăра калама та йăвăр. Кандидатсенчен 23 çынна парти членне куçарнă. Сочувствуйушчине 1937 çулта 11 çынна илнĕ.

1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшне, урăхла каласан, 5 уйăх хушшинче партине 52 çынна илнĕ. Куратăр ĕнтĕ, ку тĕлĕшпе пирĕн кăшт та пулин хускану пур. Малала докладчик партине илнисен составне категорисем тăрăх каласа парат. Партине илнисен составĕнче 40 комсомолец пур. Ку вăл лайăх, анчах партин тата комсомолăн пуçламĕш организацисем вĕсене малала йарас тĕлĕшпе халĕ те çаплах начар ĕçлеççĕ-ха.

Есĕр пĕлетĕр, хулари парторганизацин III-мĕш конференцийĕнче хулари парторганизацин тăшманла руководствине тăрă шыв çине кăларман пулнă. Çапла вара, хула комитечĕн составĕнче тăшмансене тупса, вĕсене тăрă шыв çине кăларнă çĕрте хулари парторганизацисене чăрмантарса пыракансем нумай пулнă. Хулари пĕтĕм парторганизацине çавăн пек çынсенчен тасатас тĕлĕшпе хула комитечĕ çак иртнĕ вăхăтра пысăк ĕçсем туса ирторчĕ. Обкомăн IV-мĕш пленумĕ Петрова тата урăххисене те кăларса сирпĕтрĕ, вăл парторганизацине тăшмансенчен тата вĕсене пулăшакансенчен тасатма условисем туса пачĕ.

Хула комитечĕн руководствинче çак вăхăтра нумай çынсем пулса курнă. Хула комитечĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулса Петров ĕçленĕ, вăл: епĕ Обкомра та тата хула комитетĕнче те 5 çекретаршĕн пĕччен ĕçлетĕп,—тесе пур çĕрте те кăшкăрашнă, ĕç чарăнса ларнине вăл çавăнпа сăлтавланă. Епĕр çапла шутлатпăр, çав çын парти Обкомĕпе хула комитечĕн йĕртсе пырас ĕçне тÿрĕ кăмăллă большевиксене лартассинчен хăрана.

Хулари парторганизаци хăйĕн ретне тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирторчĕ. Çак иртнĕ вăхăтра хулари пуçламĕш парторганизацисем 101 çынна партирен кăларнă. Çак калама çук пысăк тасату ĕçĕнче хулари парторганизаци тата хула комитечĕ пысăк йăнăш та тунă. Вăл йанăша ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенисем хыççăн тин большевикла тÿрлетнĕ. Мĕнле йанăшсем тунă-ха епĕр? Осоавиахим Тĕп Совечĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци октябĕрĕн 11-мĕшĕнче пĕр пухурах 4 çынна партирен кăларнă, хула комитечĕн шухăшĕпе вĕсене кăлармала пулман. Çак пуçламĕш парторганизаци вăл йанăша халĕ те туса пыма пăрахмаст. Партин хула комитечĕ пуçламĕш организаци Биктимирăв йултăша партирен кăларма йышăннă решенине пăрахăçа кăларсан, пуçламĕш парторганизаци партин хула комитечĕн решенине хирĕç тăнă. Çав ĕçре Оçипăв йултăш та лайăх мар вырăн йышăнчĕ. Вăл ку тĕлĕшпе хăйне хăй страхлама шутланă пулас.

Чукунçул тытăмĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци те 4 çынна пĕр харăс партирен кăларнă. Хула комитечĕ пуçламĕш организацин решенине парахăçа кăларчĕ, вĕсене пурне те партине кайала илмеле тунă.

Пединститутри пуçламĕш организаци те пысăк йанăшсем тунă.

Çакăнча пĕрлех, партин хула комитечĕн хăйĕн те пысăк йăнăшсем пулнă. Партин хула комитечĕ партирен кăларнă чухне парти членĕсем çине питех те тĕплĕн пăхмалли çинчен пуçламĕш парторганизацисене вăхăтра асăрхаттарман. Пуçламĕш организацисем партирен кăларма çителĕклĕ кăтартса паракан тата тĕплĕн тĕрĕсленĕ материалсем çук çинчех коммуниссене партирен кăларнă, партин хула комитечĕ ун çинчен пĕлнĕ пулин те çав ĕçрен пăрăнса тăнă, çакăн пирки вăра апелляцисене пăхса тухасси вăрама тăсăлнă. Босяков, Данилăв, Иванов коммуниссем тата ыттисем тĕлĕшпе те партин хула комитечĕн бÿровĕ йанăш тунă. Хула комитечĕ комсомолăн малтанхи йĕртсе пыракан работникĕсем тĕлĕшпе те тĕрĕс мар тунă. Решенисене комсомолăн облăçри конференцинчи делегатсем каланă тăрăх йышăннă пулнă, ăна çавăн пек тума комсомол Тĕпкомĕн инструкторĕ Мишакова пулăшнă.

Малала докладчик комсомолăн облăçри конференци ĕçĕ мĕнле лару-тăрура пулса иртни çинчен каласа парат.

Хула комитечĕ хăй йышăннă 18 решенисене тепĕр хут пăхса тухнă. Кусенчен 7-шĕ партирен кăларни çинчен йышăннăскерсем тата 11-шĕ— взысканисем парасси çинчен. Хула комитечĕ 6 çынна партине кайала илмеле тунă тата 11 çынна выгăвăр панине пăрахăçа кăларнă. Кунсăр пуçне хула комитечĕ 4 çынна икĕ çул кайала выгăвăр панине пăрахăçа кăларнă. Çав решенисем çумне нумай тÿрлетÿсем хушнă. Çакăн пек решенисем те пулнă: çынăн айăпĕсем çинчен каласа тухнине вуласан, ăна тĕрмене хупса лартмала тейĕн, постановленире — выгăвăр йе на вид парас тесе çырса хунă. Çаксем пурте ĕнтĕ Тĕпкомăн Йанварти Пленумĕн решенисенчен хула комитетĕнче, чылай вырăнсенче пулнă шухăшсене палăртса тăнисем пулнă. Карйериссем, хăйсене хăйсем страхлакансем тата урăххисем те пулнă. Çав ĕçре Ф. Çмирнов пысăк вырăн йышăнса тăнă. Вăл хăйне тăшмансемпе кĕрешмест тесе йатласран çав тери хăрана, мĕншĕн тесен, вăл нумай вăхăт хушши контроль органĕсенче ĕçленĕ те пирĕн ĕçре тăшмансем ларнăшăн хăй ответлă пулассине вăл туйнă. Хула комитечĕ Çмирнова хула комитет çекретарĕнчен кăларса тĕрĕс тунă.

Отчотла вăхăтра хула комитечĕн бÿровĕнче тĕрлĕ ыйтусем пурĕ 800 сÿтсе-йавнă. Анчах çакна палла тумала: хула комитечĕн бÿровĕ чылай ыйтусем тĕлĕшпе решенисем йышăнман, сăмахран, хуçалăх строитĕлствин ыйтăвĕсем тĕлĕшпе. Тÿрех калас пулат, партин хула комитечĕ çак вăхăтра хулари хуçалăх строитĕлствине çителĕклĕн йĕртсе пыман.

Хула комитечĕ 6 хут пленум туса иртернĕ. Вĕсенче пуринчен ытла организацилĕ ыйтусене сÿтсе-йавнă. Хула комитечĕ партком секретарĕсемпе парторгсене пухса калаçнă, канашлусенче партилĕ-политлкăлă ĕçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене лартнă.

Пирĕн парторгсем час-часах улшăнаççĕ. Иртнĕ çулта суйласа хăварнă парторгсенчен 50 процентĕ çĕнĕ суйлавсем пуличчен йулман. Ку вăл çакăн пирки пулнă: парторгсен составĕнче тăшмансем те пулнă, пуçламĕш парторганизацисене йĕртсе пыма пултарайман çынсем те пулнă. Тепĕр йĕнчен тата чылай парторгсене пысăкрах ĕçсене куçарнă май, вĕсене урăх ĕçе йамала килнĕ.

Пуçламĕш парторганизацисем нумайĕшĕ отчотла вăхăтра хăйсен ĕçне лайăхлатса йанă. Илер, сăмахран, Йустици Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацине. Ку пуçламĕш организацинче вуншар çул хушши харкашу пынă. Йулашки вăхăтра вăл организацинче ĕç чылайах лайăхланнă. Пуçламĕш парторганизаци, хула комитечĕ пулăшса пынипе, çав харкашăва туса пыракан çынсенчен тасалма пултарчĕ. Анчах, калас пулат, ку ĕçе вĕçне çитиех туса çитермен-ха. Вăл пуçламĕш организацин халĕ те чылай пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Хулари парторганизацинче çак вăхăтра парти документĕсене пурĕ 14 çын çухатнă—парти билечĕсене 9 çын тата кандидат картăчкисене 5 çын. Çак хисепрен Йустици Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 6 çын партбилет çухатнă.

Паллах, пуçламĕш парторганизацисен ĕçне лайăхлатас çĕрте критикăпа самокритикă пысăк вырăн йышăннă. Анчах хăшпĕр организацисенче самокритикăна начар сарса пыраççĕ. Малала докладчик самокритикăна хĕсни çинчен фактсем илсе кăтартат.

— Парти хуçалăхĕнче те нумай ситменлĕхсем пур. Парти хуçалăхĕ çинчен каласа, докладчик: парти хуçалăхне пĕтĕмĕшпех йĕркене кĕртсе çитермеле тата парти документĕсене сыхласа усрасси çине большевикла пăхассине организацилемеле, тесе вĕçлет.

Чăваш республикĕ тăрăх йĕртсе пыракан ĕçе 200 çын ытла лартнă, хуçалăх тата ытти ĕçсене пин çын ытла лартнă. Çак хисепрен пысăкрах пайĕ хулари парторганизаци çине ÿкет, мĕншĕн тесен ку вăл халăх комиссариачĕсенче тата ытти тĕрлĕрен организацисенче ĕçлеме тĕллесе лартассине сыхăнса тăрат. Партин хула комитечĕ работниксене пысăкрах ĕçе лартас ĕçе хăйуллăнах туса пычĕ. Анчах çак ĕçре епĕр йанăшсем те тăватпăр-ха— йурăхсăр пирки çынна ĕçрен кăларнă, ăна пирĕн урăх ĕçе лартаççĕ, час-часах тата вырăнсенчи работниксене пысăкрах ĕçе хăпартас вырăнне, çав пĕрре ĕçрен кăларнă çынна́х татах та ответлăрах ĕçе лартаççĕ. Малала докладчик çак йанăшсене фактăсемпе кăтартса парат.

Парти организацине идейăлă-политикăлă воспитани парасси çинчен чарăнса тăрса, докладчик çак ĕçе сăнласа паракан цифрăсем илсе кăтартат. Вăл пĕтĕм парторганизацине тимлĕн вĕренме чĕнет, çав вăхăтрах, уйăхĕ-уйăхĕпе парти вĕренĕвне хутшăнман мăнаçланса кайнă уйрăм руководителсене (Çутĕç Халăх Комиссарĕ Оçипав й. т. ыт.) çивĕччĕн критиклет.

Хула комитечĕ хулара туса иртерекен калама çук пысăк агитацилĕ-массăлă ĕçе палăртмасăр хăварма йурамаст. Хулари парторганизаци агитатăрсен хисепне пит пысăккăн ÿстерме пултарчĕ. Пирĕн хальхи вăхăтра хулара 1.000 агитатăр пур, вĕсем пысăк ĕç туса пыраççĕ.

Тĕне хирĕçле ĕç çинчен каласа, докладчик отчотла тапхăрта тĕне хирĕç 575 вечĕр туса иртерни çинчен пĕлтерет, вăл вечăрсенче 26 пин çын пулнă. Докладчик тĕне хирĕçле пропагандăна малашне те пĕтĕм вăйран сарса пыма чĕнет.

Черетри задачăсем

— Çакăнта каланисенчен çакăн пек вывăд тумала,—тет малала докладчик,—партин хула организацийĕ III-мĕш конференцичченхинчен нумай ыйтусем тăрăх лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Анчах та хулара парторганизацин тĕп задачăсене татăклăнах малала илсе пыма кирлĕ пулнă, вăл задачăсене хулари организаци кутаринччĕнех хăйусăртарах татса парат. Епĕ кунта парти организацине ÿстерес ыйтусем пирки, парти хуçалăхне лайăхлатас ыйтусем пирки, çынсене малашне те йĕртсе пыракан ответлă ĕçсене куçарас ыйтусем пирки, тĕне хирĕçле пропагандă т. ыт. ыйтусем пирки калатăп. Хальхи вăхăтра çитĕнÿсем çинчен сахалтарах каласас пулат. Партин хула комитечĕн партири ĕçĕн, пирĕн хулари хуçалăхпа культура стритĕлствине йĕртсе пырасси мĕн пур ыйтăвĕсене большевикла татса памала, пирĕн умра тăракан задачăсем калама çук пысăк. Чи сывăх задачă вăл—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене иртересси. Парти организацин çак суйлавсене иртнĕ суйлав кампанинчен те лайăхрах иртерес пулат. Иртнĕ суйлав кампанинче тунă йанăшсене тимлесех шута илес пулат. Иртнĕ суйлав кампанинче епĕр суйлавсем иртерес ыйтусем тăрăх агитаци ĕçне лайăх та тĕрĕс туса пытăмăр, анчах та кулленхи хуçалăхлă-по-

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

*) Кĕскен пичетлетпĕр.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн отчочĕ

(Йулашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра)

литикăлă задачăсене мăнăçа хăвартăмăр Верховнăй Советсене суйласси çинчен агитацилĕ-массăлă ĕçе туса пынипе пĕрлех, парти организацин суту-илу, хулана лайăхлатса илемлетес тата ытти ыйтусемпе те ĕçлемелле тата вăл ыйтусемпе оперативлăрах та конкретнăрах ĕçлемелле.

Çакăнпа пĕрлех тата парти организацин партилĕ тата производствăлла дисциплинăна пăсакансемпе татăклăн кĕрешес пулат. Ĕнĕр производствăлла дисциплинăна çирĕплетме тата хулари мĕн пур предприятисене промфинплана тултармала тума тивĕçлĕ.

Çак задачăсене татса парас пулсан, пирĕн парти организацине хамăр'н партин Тĕп Комитечĕ тавра пĕтĕçтерес тĕллĕшпе татах та ытларах ĕçлеме кирлĕ. Нимĕçле тăшман та пирĕн парти организацинче шăтăк-çурăк тупмалла мар тăвас пулат. Парти организаци умĕнче тăракан мĕн пур задачăсене—парти аппаратне те, политикăлă-массăлă ĕçрисене те, хуçалăхпа культурă строительствинчисене те—чыслăн пурнăçа кĕртмелле. (Алă çупаççĕ).

Йалхуçалăх валĕçи кадрсем массăллăн хатĕрлес ĕçе тĕпрепех çĕнетмеле

Социалисăмлă йалхуçалăх валĕçи кадрсем вĕрентсе кăларас тĕллĕшпе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йĕнĕпе кашни çулах пит нумай укçа-тенкĕ тухат. Çав укçа-тенке пуринчен ытларах районри колхоз шкулĕсемпе тĕрлĕрен курссем ирттерме çĕре кайат. Анчах та, тĕплĕн илсе пăхсан, кадрсем хатĕрлеме государства панă вунишар, çĕршер пин тенкĕ укçа пĕтĕмпех усăллăн расхутланса пырат теме нийепле те май килмест. Тĕп сăлтав кунта—йалхуçалăх валĕçи массăлă кадр хатĕрлес ĕçе пĕр центра пăхăнтарса тăманни пулат.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче техникумсемпе шкулсен пайĕ пур. Çав пайра ĕçлекенсем ку таранччен йаланах улшăнса тăнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн руководствин техникумсемпе шкулсен пайне çирĕплетесси çине пĕртте çаврăнса пăхман. Çавăнпа та йалхуçалăх валĕçи кадр хатĕрлес ĕç ку таранччен ним йĕркесĕр пулса пынă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн управленийĕсем кадр хатĕрлеме тесе районсене укçа-тенкĕ тата план йарса тăнă, анчах çав укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнине, кадрсем хатĕрлемели плана мĕн таран тултарнине нихăçан та тĕрĕслесе пыман.

Районсенче колхоз шкулĕсене тата тĕрлĕрен курссене вĕренме кама май килнĕ, çавна илнĕ. Хутла сахал пĕлекенсене те, 6—7 çул вĕреннисене те ним тиркемесĕр илсе пĕрле вĕрентнĕ. Вĕренекенсенчен нумайĕшĕ темиçе тĕрлĕ курсра вĕренсе курнă. Акă, Вăрнарти колхоз шкулĕнче вĕренекен Çергейев районри колхоз шкулне кĕриччен малтан 18 тĕрлĕ курсра вĕренсе пăхнă. Çергейев пеккисем кашни районтах нумай. Весем уйхир ĕçĕ çинчен те, выльăх-чĕрлĕх çинчен те тата ытти тĕрлĕ йалхуçалăх ĕçĕсем çинчен те вĕренсе курнă. Пур ĕçе те лайăх пĕлекенсем пулнă, анчах, тĕрĕссипе илсен, вĕсем колхозра нихăш ĕçре те ĕçлемеççĕ, ăçта мĕнле курс уçăлат—каллех çавăнта кайаççĕ. Ку вăл йалхуçалăх валĕçи кадрсем хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене кăтартакан пĕр тĕслĕх.

Тепĕр тĕслĕх вăл—ку(р)сенче тата шкулсенче вĕренсе тухнисем пе тĕрĕс усă курманни. Т. Зайцĕвă йултăш Канашри механизаци шкулĕнче комбайнер пулма вĕрентекен отделенинче вĕренсе тухнă. Вĕренне хыççăн Улатарти МТСгацине тăвăрăнсан, Зайцĕв йултăша тракăр плугĕ çинĕ лартнă. Виноградов йултăш та комбайнера вĕреннĕ. Комбайн çинче вăл икĕ çул хушши лайăх ĕçленĕ. Анчах та кайран Елĕкри МТС руководителĕсем Виноградов йултăша комбайн çинчен куçарса шофера лартнă.

Кадрсем хатĕрлес ĕç çавăн пек ним йĕркесĕр пынă хыççăн, паллах, çав ĕç валĕçи нумай укçа-тенкĕ пĕтерсен те кадр çителĕклĕ пулаймаст. Вара каллех çĕнĕрен курссем организацилесе çĕнĕ çынсене вĕрентеççĕ, вĕсем те кайран ăçта май килнĕ, унта саланса пĕтеççĕ.

Йалхуçалăх валĕçи кадрсем массăлă хатĕрлес ĕç çавăн пек йĕркесĕр пулса пынине малашне, тĕплипех пĕтермелле. Вăл халăх тăшманĕсен сăтарла ĕçĕ. Çав йĕркесĕрлĕхе пĕтерни вăл халăх тăшманĕсен сăтарла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерни пулат.

Йалхуçалăх валĕçи массăлă кадр хатĕрлес ĕçе йĕркелĕ организацилес тесен, пирĕн шутпа чи малтанах çаксене тума кирлĕ:

1) Кадр хатĕрлес ĕç пĕтĕмпех техникумсемпе шкулсен пайĕн плане тăрăх пулса пымалла;

2) Массăлă курссем пурте районсенчи колхоз шкулĕсем урлă пулса иртмеле;

3) Курссене тата колхоз шкулĕсене вĕренме йĕнчен пĕр пек çынсене, колхоз ĕçне чăн-чăн йуратакансене вĕренме илмеле;

4) Колхозра йе колхоз шкулĕсенче вĕренсе тухнисене стандартлă свидетельствăсем парса, вĕренсе тухнисемпе колхозсенче мĕнле усă курнине çĕрĕç органĕсен тĕрĕслесе тăмала;

5) Çав шутпа районсенчи колхоз шкулĕсене çирĕплетмеле, райĕçтăвком президиумĕн ларăвĕсенче вĕсен отчочĕсене итлесе, çав шкулсене пулăшусем памала.

Çак тĕп условисене пăхăнса ĕçлесен, пирĕн шутпа кадр хатĕрлес ĕç чылайах йĕркеленмеле. Паллах, çав ĕçе йĕркелесси çине малашне колхоз руководителĕсен хăйсен те тимлĕн пăхмала.

М. К.

Республикăлă Испанире

УКЕРЧĔК СИНЧЕ: Валенçире пулнă спорт уйавĕ (1938 çулхи март уйăхĕ). (Сойуфото).

Мӳресăв пионерăн хăйула ĕçĕ

Майан 23 мĕшĕнче Тĕмерти (Тăвай районĕ) вăтам шкулăн çекретарĕ А. К. Абрамăв госбанкăн Тăвайĕнчи уйрăмĕнчен учительсене ĕçукçи пама 6 пин тенкĕ ытларах укçа илнĕ. Вăл Вăрманхĕрри йалĕнчен тухсан çур çула çитсен çырма пуçĕнчен пĕр çын тухнă та тӳрех Абрамăва чулпа хĕнеме пуçланă. Вăл çын Чӳк çырми йалĕсем (çав районах) Иван Лаптин пулнă. Иван Лаптин Абрамăва пуçран хĕнесе антарнă та укçине туртса илсе Вăрманхĕрри йалĕ патнелле тарма тытăннă. Çав вăхăтра Тĕмерти шкулта вĕренекен И. Мӳресăв пионер ăшшĕпе пĕрле çав таракан çынна хăвалама пуçланă. Вĕсем Иван Лаптина Вăрманхĕрри йалĕнче тытнă. Укçине Лаптинран илсе Абрамăва панă.

И. Мӳресăв пионера çакăн пек хăйула ĕç тунăшăн Тăвай райĕçтăвкомĕн пленумĕ 150 тенкĕ укçан преми панă.

А. Пикишкин.

Виççĕмĕш колхоз театрĕ йалсенче

Чăвашсен виççĕмĕш колхоз театрĕ çамрăк ха. Çапах вăл хăйĕн пултарулăхне кăтартма ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Осипăв çырнă „Айдар", Павлăв çырнă „Йалта" пйесăсене театр ултă районри колхозсенче лартса кăтартрĕ.

Нумай пулмаст ку театр Хучаш йалĕнче (Йетĕрне р.) „Пограничниксем" пйесă лартса пачĕ. Колхозниксем артиссене ăшшăн йышăнчĕç. Пйесă куракансене питĕ килĕшрĕ. Выляакансем хăйсен ролĕсене аван ăнланнă, çавăнпа рольсене ĕненмеле, лайăх выльарĕç.

Совет пограничникĕсен пурнăçне, вĕсем совет çĕршывĕн чиккине çирĕп сыхланине, тăван çĕршывшăн пуçĕсене хума та хатĕррине уççăн кăтартса панă, пйесăна колхозниксем хавассăн йышăнчĕç.

В. Çвешникăв.

К Ĕ С К Е Н

■■ **Пысăк кӳлĕ.** Чулкассинчи (Шупашкар районĕ) „Çăлту" колхоз кăçал пысăк кӳлĕ турĕ. Колхоз ку кӳлĕре пулă ĕрчетет.

А. Николайĕв

■■ **Спорт площадки.** Кăшаркассинчи (Çĕрпӳ районĕ) „Пионер" колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацийĕ спорт площадки турĕ. Площадкăра çамрăксем футболла, волейболла тата турник çинче выльаççĕ.

Н. Окунĕв

■■ **Оборонă значокĕсем илеççĕ.** Хурамалти (Йĕпреç районĕ) вăтам шкулта вĕренекенсем 45 ача ПВХО значок нормине, 12 ача ГСО значокĕн пĕррремĕш сыпăк нормине панă.

Д. Арçентйĕв.

ТАВАТА ПИН ТЕНКЕЛĔХ ПУЛĂШУ. Пысăк Чăраш йалсоветне (Çĕрпӳ районĕ) кĕрекен Жданăв йачĕпе тăракан колхоз членĕ Павăл Аниçимăвăн çемйинче 11 çын, ачасем 8. Унăн çемйи нумай ачаллă пирки государствăран 4 пин тенкĕ пулăшу илчĕ. Çав йалсоветрах „Пучах" колхоз членĕ Кирилл Петров 7 ачаллă пулнине 2 пин тенкĕ пулăшу илчĕ.

Вĕсем хăйсен ачисем валĕçи кĕпе-тумтирсем, вĕренмели хатĕрсем илсе пачĕç.

Н. Мефодийĕв

◆ **АВТОМАШИНА ТУЙАНЧĔ.** Пиçенер йалсоветне кĕрекен „Комсомол" колхоз (Елĕк районĕ) государствăна ашкакай сутса грузовик туйанчĕ. Халь Чулкасри „Смычка" колхоз илме хатĕрленет.

НИКИФАРАВ.

◆ **САТ УСЕТ.** Тосинкассинчи (Шупашкар р.) „Ударник" колхозăн сат пур. Кăçал унта колхоз çĕнĕрен 1.900 улмуççи, 444 чей çырли йăвăççи, 50 хăмла çырли йăвăççи лартса кăварчĕ.

Г. ТИМОФЕЙЕВ.

◆ **АЧАСЕМ ÇУРАЛНИ УССЕХ ПЫРАТ.** Упнер йалсоветĕнче (Вăрнар р.) ачасем çурални иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан чылай ӳснĕ, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшне çитиччен 32 ача çуралнă.

К. ИВАНОВ.

НАЛУК ĔÇĔПЕ ĔÇЛЕКЕНСЕН КУРСĔ. Çĕрпӳ райĕçтăвкомĕн финанс пайĕ майăн 20-мĕшĕнче налук ĕçĕпе ĕçлекенсен 10 кунлăх курсне организацилерĕ.

Курсра 25 çын вĕреннĕ. Вĕсем курсран вĕренсе тухсан йалсоветсене налук ĕçĕсене йĕркелеме кайрĕç.

640 ЙĂВĂÇ ЛАРТНĂ. Канашри вакунсем йусакан савăтран сопхулана кайакан çула чулпа сарса тухнă. Халь çак çулăн икĕ йенĕпе 640 тĕп йăвăç лартса тухнă. Унтах ларса канмали тенкелсем тăваççĕ. Йăвăççене шăварса тăма икĕ çын уйарнă.

Д. Иванов.

Редакцине килнĕ çырусем

Куславкка комбиначĕн ĕçĕсене хăвăртрах тĕрĕслемеле

Йулашки вăхăтра Куславкка комбинатĕнче икĕ çĕр çынна йахан рабочисем стахановец йатне çухатнă. Çак чаплă йата вĕсем хăйсен айăпĕпе мар, комбинат руководстви ĕçе начар организацилениипе çухатнă.

Чи лайăх стахановецсем—маçтăрсем: Никифăрăв, Мозйаков, В. Илйин, Н. Илйин йултăшсем пирвайхи квартăлта та, апрел уйăхенче те вĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарнипе тата ĕç вырăнне начар йĕркеленĕ пирки хăйсен нормисене тултараймарĕç.

Рабочисен стахановла ĕçлеме пысăк çĕкленӳ пур. Анчах комбинат руководителĕсем рабочисене стахановла ĕçлеме пулăшса пыма мар, чармантарса параççĕ.

Майăн 3-мĕшĕнче комбинатăн аслă диспетчерĕ Мотин чӳрече коропкисем тума график панă. Коропкăсем тумалли йăвăçне çавăн хыççăн вунă кунтан тин тупса панă. Чӳрече рамĕсем тумалли йăвăç хăçан пулассипаллă та мар-ха Çапла ĕнтĕ график хут çинче çеç пулса тăрат. Çирĕп графиксăр ĕçлени, цехсем хушшинче килĕшӳлĕ сыхăну çукки,—ĕçре питĕ хытă чăрмантарат.

Йăвăç каскалакан цехра уйрăм йапаласен чăçĕсене комплектлă туса пыман пирки нумай детальсем купаланса выртаççĕ, хăшпĕр станок патне çывăха та пыма çук.

Ĕç йĕрки çуккине кура нумай рабочисем комбинатран туха-туха кайрĕç. Халĕ комбинатра 400 рабочи йахăн çитмест. Вĕсене ăçтан илессине комбинат руководстви нимĕн те пĕлмест.

Рабочисем кашни кунах механизмсене начар тӳрлетни çине, чĕр тавар (йăвăç) начар тăратни çине кăтарса параççĕ. Çурт хатĕрĕсем тăвакан цехра пит хаклă „Робинзон" станок çĕççисене улăштарнă чухне сехет çурă ытла ĕçлемесĕр тăрат. Станоксем начар ĕçлени, механизмсемпе кирлĕ пек усă курманни тата ытти те кунта пит нумай. Çавăнпа пирвайхи квартал планне комбинат 77 процент çеç тултарнă. Çав вăхăтрах ĕç укçи фондне 92 процент пĕтернĕ, урăхла каласан, 15 процент ытлашши расхут тунă.

Комбинатра час-часах ăнсăртлă инкексем пулаççĕ. Рабочисене сыхланса ĕçлемели çинчен ăнлантарса памаççĕ, техникă вĕренĕвне те организацилемен. Комбинатăн аслă инженерĕ Бабенко ĕçлеме кăтартса парас тата вĕрентес вырăнне намăс сăмахсемпе вăрçса çеç çӳрет.

Куславкка комбиначĕн ĕçĕсене халех тĕрĕслесе тухас пулат.

Артемйĕв.

* * *

Куславкка комбиначĕ пирĕн республикăри пысăк савăтсенчен пĕри. Кунта рабочисем пурăнакан пысăк посолăк пур,—хула пек курăнса ларат.

Анчах чаплă çуртсен шал йенне курсан тĕлĕнсех каймала. Икĕ-виç хутлă пысăк та пăхă çуртсем капашран тухнă. Акă, 4-мĕш номерлĕ çуртри хватĕрсенче пĕр форточка та уçăлмаст. Çтенасем хĕпхĕрлĕ (хăнкăла вĕлернĕ), пӳлĕмсен çтенисене ик-виç çул хушши шуратман. Коридорсенче таса мар.

Кăçалхи çул посолкăра пĕр йăвăç та лартман. Хăшпĕр çуртсем умĕнче тислĕк куписем, çӳп-çап таса мар шыв лачакисем. Посолка совечĕ çавна курмаст пулмала.

Нумайранпа ĕçлекен рабочи-стахановецсем чылайĕшĕ начар хватерсенче пурăнаççĕ, çав вăхăтрах савăтра ĕçлемен çынсем стахановецсен çуртĕнче ырă кураççĕ.

Куславкка комбиначĕн руководстви тата нумайччен „пӳрне витер" пăхĕ-ши рабочисен пурнăçĕ çине?

А. Мошков.

Çитменлĕхе хăçан пĕтерĕç-ши?

Йĕпреç районĕнчи сывлăх пайĕ иртнĕ çулта Кĕлĕмкассинче 40 ача валĕçи йаслĕ уçрĕ.

Анчах йаслĕ йĕркелĕ ĕçленине курса пулмарĕ. Йаçлĕре нумай пулнă кун та 10—15 ачаран ытла пулмаст йе тата тепĕр чухне пĕр ача та илсе пымаççĕ. Йаслĕ пуçлăхĕ Козлова йаслĕ ĕçĕ çине çавăрăнса та пăхмаст, „продуктасем илме кайатăп" тесе ерни-ерниле Канашра, Йĕпреçре пурăнат. Йулашки вăхăтра йаçлĕри ĕçсем питех те йапăх. Мартăн 20 мĕшпе майăн 5-мĕш хушшинче йаслĕ хупăнса ларчĕ.

Йаçлĕри ĕçсем начарри çинчен районра тухакан „Колхозник пурнăçĕ" хаçатра заметкă тухнăччĕ. Ун хыççăн та Козлова йаçлĕри ĕçсене аванлатассишĕн тăрăшнине курма çук. Колхозниксем районри сывлăх пайне жалаба та çырса парса пăхрĕç. Районри сывлăх пайĕнчен ĕçе тĕрĕслесе кайрĕç те, ĕçре нимĕнле пулăшу та парса хăвармарĕç. Çитменлĕхсем çав-çавах пур-ха.

А. Грачов, В. Храмăв,
И. Антонăв, В. Петров.

Шупашкар хулинчи 9-мĕш участкăри суйлав комиççийĕ пĕлтерни

Шупашкар хулинчи 9-мĕш участкări суйлав комиççин адрĕçĕ çапла: Школа имени Крупской (нижний этаж) ул. Калинина. Телефон № 5—00.

Шупашкар хулинчи 3-мĕш участкăри суйлав комиççийĕ пĕлтерни

Шупашкар хулинчи 3-мĕш участкăри суйлав комиççин адрĕçĕ çапла: Городская больница, красный уголок. Телефон № 5—41.

Шупашкар хулинчи 1-мĕш участкăри суйлав комиççийĕ пĕлтерни

Шупашкар хулинчи 1-мĕш участкăри суйлав комиççин адрĕçĕ çапла: Школа имени Кирова, ул. Новая д. № 37, телефон № 3—73.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Совет живописĕн пысăк çитĕнĕвĕсем

П. П. Соколов—Скальд художник статйи

20 çул хушшинче совет искусстви хамăрăн чаплă тапхăрти ĕçсене йар уççăн кăтартакан чылай произведенисем пачĕ. Вĕсенчен чи лайăххисем, пуринчен ытларах вăйлă произведенисем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ пилĕк, вунă, вунпилĕк çул тултарнă йатпа уçнă выставкăсенче пулнă. Çак выставкăсем Совет Сойузĕнчи живопиç искусствин пурнăçĕнчи пысăк событисем, унăн аталанăвĕнчи паллă тапхăрсем пулнă.

Рабочи класăн хĕçпăшалла кĕрешĕвĕн тапхăрĕсем тата Хĕрлĕ Çар историйĕ совет живописĕн чи лайăх произведенисем валĕçи темăсем пулса тăнă.

Пирĕн художниксен ĕç маçтăрлăхĕ пĕрмайăх ӳсет.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар Флочĕн кашни йубилейлă выставкийĕх çамрăк художниксен калăрĕсене палартат, вĕсен йачĕсене совет искусствин историне çырса çирĕплетсе хăварат.

Çак выставкăсене халăх питĕ нумай çӳрет. Тĕнчери Искусствă выставкисене пăхма халăх сакăн чухлĕ çӳренине нихăçан та курман. Выставкă залĕсем тăрăх утса тухса, пирĕн совет çыннисем йуратакан произведенисемпе тивĕçлĕ художниксене паллă тăваççĕ.

Май уйăхенче Мускавра „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарни" йатлă выставкă уçăлнă. Çак выставкă пирĕн Хĕрлĕ Çар историне красногвардейцăсен паттăр отрйачĕсенчен пуçласа, хальхи вăхăтри техникăпа вăйлăн хĕçпăшалланнă, никам çĕнтерейми, тăшмансемшĕн хăрушă вăй пулса тăракан Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне çити кăтартат.

Выставкăн историлĕ пайĕ — граждан вăрçи совет художникĕсем умне хăйне уйрăм задачăсем кăларса тăратат. Çак искусствăн жанарĕ питĕ пуйан. Малтанхи ĕмĕрсенчех художниксем йутçĕршывсене туртса илекенсен çапăçувĕсемпе çĕнтерĕвĕсене ӳкернĕ. Халăха, çарăн тумтирĕн формине, Рим салтакĕ йе Англи çарĕн снайперĕ противогаз тăхăннине ӳкерсе кăтартнă. Империалисăмла государствăсен искусстви пуринчен ытла вăрçăн стратегипе тактикине, полксен формисене, полководецсен геройла ĕçĕсене сăнласа кăтартнă. Çаксем картинăсенчи пĕртен-пĕр жанăр елеменчĕ пулнă, ыттисене пурне те нимĕн чунсăр сăнласа кăтартнă.

Вырăс искусстви питĕ чаплă баталиса Верешчагина пĕлет, вăл батальнăй живопиç историне реалисăм çулĕ çине, историлĕ утăмсене ăнланас çул çине тăратнă. Çав историлĕ утăмсем хăйсемпе пĕрлех вăрçа кăлараççĕ. Верешчагин народниксен пацифисла çулĕ çине тăнă, унăн „Апофеоз войны" йатлă картининчи етем шăммисен купи унăн шухăшĕн сăнсăпатне йар уççăн кăтартса парат. Суриковăн „Суворов в Альпах", „Покорение Сибири Ермаком" йатлă картинисенче реалисăмлă нота тата ытларах курăнат. Çав картинăсенче çын, унăн психологилĕ лару-тăрувĕ паллă вырăнта тăрат.

Совет Сойузĕнчи батальнăй шкул (унăн пуçламăшне „Перекоп" картинăна çыракан художниксен ĕçĕнчен, граждан вăрçин фрончĕсене сăнласа кăтартакан ытти художниксен ĕçĕсенчен курма пулат) историлĕ событисене чăнласах сăнласа кăтартат. Çавăнпа та пĕтĕм тимлĕхе çын çине, унăн социаллă сăн-сăпачĕ çине, вăл çапăçура хăйне мĕнле тыткалани çине хураççĕ. Батальнăй картинăсен сюжечĕсем çапăçусемпе çĕнтерӳсем çеç мар, клас кĕрешĕвĕ, общественлă хирĕçӳсем мĕнле тăни пулат. Çавăнпа та пирĕн Хĕрлĕ Çарăн йубилейлă выставкисенче хăйне уйрăм батальнăй картинăсемсĕр пуçне „жанăрлă" картинăсем нумайрах пулнă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа уçăлнă выставкăра батальнăй картинăсем ытти çулхисенчен чылай нумай, пахалăх йенĕпе те ытти çулхисенчен чылай малта. Художник-баталиссем пуринчен ытла ленинградĕцсем пулнине паллă тумала. Френц „Утлă Çарпа танксем çапăçура пĕрле", „Кирав йултăш Çурçĕр Кавказра" йатлă картинăсене питĕ чаплă ӳкернĕ. Серов „Чапайĕв штабĕ" йатлă тĕрĕс тата вăйлă картинă панă.

Çакнашкал маçтăрсен шутне Кутателадзене те кĕртмеле. Унăн батальнăй ĕçĕсем пĕр темăра пĕрлешнĕ. „Орджоникидзе йултăш партизансем хушшинче" йатлă картининче автăр пысăк живопиç çине куçассишĕн тăрăшни синчен калат.

Художник—баталиссен ушкăнне çавăн пекех Кочергина кĕртмеле. Унăн „Вăтăрăмĕш дивизи махновецсене аркатат" картини сюжета тĕрĕс панипе хумхантарат.

Москвичсем батальнăй темă çине урăхларах пăхаççĕ. Москвичсем картинăсенче граждан вăрçин сăнлăхне тата йăли йĕнĕсене ытларах кăтартаççĕ.

Çамрăк художникăн В. Прагоран „Большевикла йурă" йатлă картинĕнче çăмăр çуса кайнă çулсен, окопри шинелсен пейсажĕ, пĕлĕт хăй те çав вăхăтри пек курăнат.

Живопиç тĕлĕшĕнчен Г. Шегелĕн „Керенски тарни" йатлă картини истори тĕлĕшĕнчен пит те тĕплĕн çырнă. Картинă вăйлă.

Кукрыниксы художниксем „Ир" йатлă питĕ чаплă картинă панă. Картинă, ĕçсе çинĕ хыççăн, офицерсен хватерĕ мĕнлине сăнласа кăтартат.

„Перекоп" автăрĕсенчен пĕри А. Куликов „Фрунзе 15-мĕш дивизи штабĕнче" картинăна питĕ тĕплĕн шухăшласа çырнă. Унăн выставкăра Сталин йултăшăн чаплă портречĕ пур.

Историлĕ живопиç пайне хамăрăн карикатуриссен ĕçĕсене те кĕртмеле. Вĕсем хушшинче Коневскин „Предки и потомки интервентов" йатлă картини уйрăмах палăрса тăрат.

Выставкăн пысăк пайне хамăр çĕршывăн, Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс-Çар Флочĕн пайанхи пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан картинăсем йышăнса тăраççĕ.

Пирĕн çулпуççен пурнăçĕпе ĕçĕсене сăнласа паракан, питĕ палăрса тăракан ĕçсем, пролетариатăн аслă çулпуçне Сталин йултăша хисеплесе, Совет Сойузĕн пĕррремĕш маршалне Ворошилăв йултăша хисеплесе çырнă лайăх картинăсем пур.

Искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, орденоносец А. Гераçимăв çĕнĕ Мускав сăнне, Сталинпа Ворошилăв йултăшсем Кремльре çӳренине сăнласа кăтартат.

В. Свароган хитре, савăнăçлă картинĕнче Сталин йултăш тата Политбюро членĕсем Тушинă аэродромĕнче пулнă чуххехи авиаци праçникне кăтартат.

А. Моравăв „Ленин тата Сталин йултăшсен калаçăвĕ" йатлă картинă ӳкернĕ. Владимир Илйичăн Кремльри кабинетне питĕ йуратса тунă. Çулпуçĕсен сăнĕсене вырăс жанриачĕсен чи лайăх традицийĕпе çырнă.

Хальхи вăхăтри Хĕрлĕ Çар вăйне кăтартакан пай питĕ те лайăх, хитре картинăсемпе пуйан.

Г. К. Савицки „Маневăрсенчи кану" картинă çырнă, хĕвеллĕ çанталăк, савăнăçлă вырăн. Рылов романтикла „Доçенипе" йатлă хитре картинă панă. Çамрăк художник Кремер (Ленинград) лайăх, анчах кăштах декоративлă картинă—„Танксем засадăра" панă.

Пирĕн Тинĕс-Çар флотне хисеплесе çырнă картинăсенчен ленинградĕцсен—Дроздовпа К. Соколовăн, москвичсен—Дорохăвпа Ниско ĕçĕсене палăртмала. Бубликăв вăйлă çырнă картинăна—„Балтфлот походне" паллă тумала.

Хамăрăн мухтавлă пограничниксем çинчен çырнă картинăсенчен М. Соловйов ĕçне палăртма йурат. Художник пирĕн пограничниксен Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи геройла ĕçĕсене кăтартат.

Инçет-Хĕвелтухăç чиккинчи пограничниксен—боецсен чаплă ĕçĕсем живописпе тивĕçлипе курăннине кăмăллăн, савăнса палăртмала.

Авилăв „Диверсанта тытни" йатлă картинă çырнă. Картинă интереслă, композиципе живопиç тĕлĕшĕнчен аван.

„Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн ХХ çулĕ" йатлă выставкă совет культурин чаплă çĕнтерĕвĕ пулат, унта темиçе пин çын пырса курĕç, кураççĕ те.

Пĕлтерни

Учрежденисен, предприйатисен тата организацисен ÇСР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ тăрăх итоглă отчочĕсене тăратмалли срук—ИЙУНĔН 1-мĕшĕ АСĂРХАТАРАТПĂР, алла памасăр йулнă облигацисене тата итоглă отчотсене ийунĕн 5-мĕшĕччен (ку кун 1-мĕш тираж пулат) перекет кассине тавăрса паманнисене айăпласа ответ тыттараççĕ.

60-мĕш Тĕп Перекет кассы.

2—2

ШУПАШКАР ТОРГĔН

пĕрле апатланас тĕлĕшпе ĕçленекен

УЙРĂМНЕ

АСЛĂ БУХГАЛТĔР КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрĕç: ул. Кадыкова, д. № 5/
Отдел общественного питания.

ШУПАШКАРТИ „БАКАЛЕЯ" МАГАЗИННЕ

Тавар уйрăмĕн пуçлăхĕсем, продавецсем, каççирсем

к и р л ĕ

Çак адрĕçпе пымала: Красная площадь, д. № 3, в контору

2—1

„СПОТАРА"

Чăваш республикĕнчи кантурĕ

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче йалан ĕçлеме тата çакнашкал специальнăçсемпе ĕçлеме рабочисене йышăнат:

Вутă турттаракансем (кантур лашисемпе),
Йăвăç касакансем,
Станочниксем (станоклă çавра пăчкăсемпе ĕçлеме),
Прийомщиксем,
Рабочисем (тĕрлĕрен ĕçсенче ĕçлеме).

Çак адрĕспе пымала: гор. Чебоксары Красноармейская № 5. Контора „Спотара".

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 276

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ №